98
500 чув

П. ХУЗАНГАЙ

САВАСЕМПЕ ПОЭМАСЕМ

ЧАВАШГОСИЗДАТ — 19

Национальная библиотека ЧР
00027500

27500

9
Э.І.К.

ПРОВЕРЕНО
1959

Национа
000

П. ХУЗАНГАЙ

Читальня
Х 98

СУЙЛАСА ИЛНЁ
САВĂСЕМПЕ ПОЭМĂСЕМ

Чăв. АССР Гос. Библиотека
Инв. 4
ПРОВЕРЕНО
2010

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПШКАР ● 1941

Редактор Стихван Шавлы.

НТ 4060. Подписано к печати 3/VI—1941 г.
Объем 3,75 п. л. Заказ № 267. Тираж 2600 экз.

Тип. № 1 Управ. изд. и полиграфии при СНК ЧАССР
г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати.

I

ЛЕНИНА—СТАЛИНА

Слава нашему Ленину

МУХТАВ АСЛĂ ЛЕНИНА!
МУХТАВ АСЛĂ СТАЛИНА!

Тĕнĕрен хĕвел кĕрсе курман,
Çутатман;
Кĕреке туман пире хăна.
Çутă, тутă пурнăçшăн чунтан
Мухтав аслă Ленина!
Çутă, тутă пурнăçшăн чунтан
Мухтав аслă Сталина!

Пирĕн юрă тĕнчене тухман,
Янраман,
Макăрашнă çырмара кăна.
Халь йĕри-тавра вăл кайрĕ ян:
Мухтав аслă Ленина!
Халь йĕри-тавра вăл кайрĕ ян:
Мухтав аслă Сталина!

Саплăк пекчĕ тупăшсăр ана,
Выç ана,
Хытхура хупланăччĕ ăна.
Халь йăрансăр тулă хумханать:

Мухтав аслă Ленина!
Халь йăрансăр тулă хумханать:
Мухтав аслă Сталина!

Хамăр ял та ютчĕ хушăран,
Тарăхсан;
Вăрмана тартатчĕ самана.
Халь пире пур халăх та тăван:
Мухтав аслă Ленина!
Халь пире пур халăх та тăван:
Мухтав аслă Сталина!

Кунсерен çĕршыв хăватланать,
Асланать,
Ырлăхне сарать пур таврана.
Çĕр чĕлхе пĕр саслăн янратать:
Мухтав аслă Ленина!
Çĕр чĕлхе пĕр саслăн янратать:
Мухтав аслă Сталина!

1940.

СОВЕТСЕН КЕРМЕНЁ

Хулам улшăнать куçăмсем умĕнче,
Пурне те поэзийĕм шăнăçтараймĕ.
А çак вырăнта—çырмаллах ун çинчен—
Ларатчĕ тин çеç „çăлакан Христос храмĕ".

Ни стилĕ, ни мĕнĕ—шуйттанĕ пĕлет!—
Çĕкленĕ те лартнă пĕр мăн сăмавар.
Тӳпи ылттăнран: имĕш, ылттăн пĕлĕт
Витет сана леш тĕнчере,—чăма пар!

Çук халь ухмахсем! Пролетарин евичĕ:
Пĕр хамăрăн алăпа çех.
Пиншер çул хушши пире „çăлчĕçĕ", çитĕ,
Хурар динамит никĕсе!

Лап сӳнчĕç сăвапла чунсен çуртисем,
Тĕп пулчĕ хăлха хуплакан чан улавĕ.
Час çак вырăнта çĕр курман çурт ӳссе
Хăпарĕ—пĕччен пĕр хула пек.

Куратăп эп ун мĕлкине, ăнкарап эп:
Хăтарăннă ҫалăхăн чаплă керменĕ

Вăл—шав сарăлан революци карапĕ,
Ларать нихăçан та путманăн, çĕрменĕн.

Вăл çап-çаврака, кĕленчен те хĕвеллĕн
Тĕнче маччине шăтарса хăпарать.
Ун чи тăрринче капитанăмăр Ленин
Тăрать улшăнми вахтăра.

Малтан малалла! Хар-хаяр хумсем урлă,
Тăварлă çилпе кастарса кăкăра,
Ишер, матруссем! Тинĕс кăтăртăр, уртăр,—
Хăватлă рейс хыççăн канма пахарах.

Малтан малалла!.. Çĕнтерӳллĕ, пĕр саслăн
„Илтетпĕр!“ тесе кăшкăрар эпĕр тан.
Мĕскер пире вилĕм, эхер те пырсассăн,
Ялан пирĕнпе ывăнми капитан!

Малтан малалла! Ан тив çил-тăвăл астăр,
Пĕрремĕш йыхрав аттака чĕнсенех,
Çак паттăр карап евĕрлех, аслă маçтăр
Тăратĕ мĕнпур ĕçлекен тĕнчене.

1932.

ВАТĂ КОЛХОЗНИК ЮРРИ

Халиччен эп Мускавра пулманччĕ,
Сарлака иккен урамĕсем!
Пинĕн-пинĕн кĕрлесе чупаççĕ
Утсăрах капмар урописем.

Халиччен эп Кремльре пулманччĕ,
Кисренми иккен ун хӳмисем,
Пилĕк юплĕ çăлтăрсем çунаççĕ
Сӳнми шанчăк евĕр хĕмленсе.

Эп мавзолее кĕрсе курманччĕ,
Тахçанах асра пулсассăн та:
Çапçутах мĕн Ленин сăн-сăпачĕ,
Тĕрĕс шухăш евĕр çапçутах.

Халиччен эп Сталина курманччĕ,
Ĕмĕтре пурнаттăмччĕ савса.
Халь мана çулпуçăм алă пачĕ—
Пĕр-пĕрне нихçан та манмасса.

1933.

КАВКАЗРА

1.

Кавказ тесессĕн манăн асăмра
Ак çакăн пек сăнсем шуса тухаççĕ:
Кинжал та роза, тупă та зурна,
Кăвар пек кун та шартлама ту каçĕ...

Сăрт хушшипе, тăвăр сукмакпала,
Хаджи Мурат, Шамиль вĕçсе иртеççĕ.
Печориншăн алхаслăх япала—
Илемлĕ Бэла—пирĕн чĕреччĕ...

Пике Тамара: хӳхĕм те хаяр,
Хаяр та хӳхĕм, хăй кăчăк туртать.
Пĕр каçшăн пурнăçна илме ăн чар,
Вара эс кĕрĕн вăл чĕнен çурта...

Ачаранпах, мĕн шкул сакки çинчен,
Çапла кураттăм эп сана, Кавказ.
Е Лермонтов, е Пушкин хыçĕнчен,
Е Толстойпа—ман шухăшăм час-час

Вĕçсе çитсе улхатчĕ сан çине.
Пĕлмен пуль çав, пĕлмен пуль эп ун чух

Тĕнченĕн таса мар ĕçĕсене;
Ним тишкĕрмесĕр шаннă айван чун.

Çапах çăм буркă айĕнчи хĕçсем,
Офицерсем туртмастчĕç чĕреме.
Сан ĕмĕрхи тăвусене хĕссе
Вĕсем кăшăлласса сисеттĕм эп.

2.

Çаплаччĕ. Икĕ пуçлă ăмăрткайăк
Пăчланчĕ, чĕрĕлеймĕ вăл ĕмĕр.
Романов несĕлĕ халь тамăкра-и
Е çăтмахра—пире вăл пурĕпĕр.

Пире пулсан—çак хĕвелех илемлĕн
Ешерттĕр çурсерен çавра çĕре.
Анчах, хĕвел ăшши пĕр шай тивменшĕн,
Эпир халь чи хаяр кĕрешӳре.

Пире пулсан—сывпултăрччĕ çулпуçĕ,
Ниçта пăркаланмасăр çултытан.
Теприн сăнне куран, ăна тăнлуçăн,
Вилмен пекех çав манăими титан.

Калатпăр: Сталин, шухăшлатпăр: Ленин.
Калатпăр: Ленин, Сталин шухăшра.
Вĕсем нихçан та татăлми тĕвеннĕ,
Пĕрле ӳстернĕ аслă пĕр Çара.

Ишет карапăмăр, пайтах вăл ишĕ,
Пайтах тен чул та пур шыв айĕнче.
Шанать çултытана карап килйышĕ,
Нимрен те шикленмест ун хӳттинче.

Социализм—тĕл. Ку çывăх, пирĕн.
Унпа кăна çырлахмăпăр эпир.
Патвар карапăмăр хăюллăн, вирлĕн
Коммун рейсне тапранĕ килес ир.

Кунта ăна çапла куратăн куçăн:
Карап пулсассăн—Çĕр, капитанра—
Уйăрăлми йĕкреш тӳпи Эльбрусăн,
Ку—Ленин—Сталин, тетĕн эс вара.

1930.

ХУМХАН, ХУРА ТИНӖС!

Хура пӗлӗтсем-и, уяр-и тӗнче—
Янра, манăн юрă, хумсем çийӗнче!

Хумхан, Хура тинӗс! Кăтарт хăватна,
Курассăн сунмарăм килсе сан патна.

Виç çухрăм кайсан анкарти хыçӗнчен
Йăлт урăх çӗршывччӗ мана халиччен,

Халь манăн çӗршыв—тинӗсрен тинӗсе
Выртать шухăшпа виçейми, çиçӗнсе.

Хумхан, Хура тинӗс! Кала такмакна,
Итлесшӗн çунаттăм тахçан эп ăна.

Мана эс туртаттăн, ача сăпки пек,
Халлап-юмахпа, сăвăçсен сăввипе.

Чăваш куççулли те вӗрет-çке кунта—
Сан канăççăр, тарăн сӗм авăрунта.

Тарпа шăваран анине пăрахса,
Çӗре чуптуса та тăпра чăркаса,

Ятне çухатса ĕмĕр-ĕмĕрлĕхе,
Ăсаннă чăваш, хум касса, Тĕрĕке.

Вăл тарнă тӳссе тӳеме çук мăшкăлтан,
Çĕрти-çӳлтине ылханса пур чунтан;
Вăл тарнă—карап хĕррине карăнса
Йĕрсе алсуласшăн юлан парăса;

Вăл тарнă—Стамбул хӳмисен сулхăнне
Тăрса макăрасшăн, пăхса ку енне;

Вăл тарнă, çурхи тăрнаран Атăла
Ярасшăн салам çунакан ăшпала...
Хумхан, Хура тинĕс! Юрла манпала,
Пĕртен пĕр çĕре эп мухтап, пахалап.
Мухтатăп эп сан ку енчи çыранна;
Пĕр çавăншăн юррăм юхать, яранать.

Пĕр çак çĕрте çех, чĕремпе çĕкленсе,
Килти пек çӳреп тинĕсрен тинĕсе.
Янра, аслă шывăм, сăрнайăн-кĕслен!
Иртет çак самант нихăçан килмесле.
Телейĕм—тӳссе тĕрекленнĕ чĕлхе,
Мĕскер эп ыйтам-ши санран пиллĕхе?
Пуянлăх та марччĕ вăл, канлĕх те мар:
Хăват çăлкуçне типесрен эс хăтар.

Хумхан, Хура тинĕс! Хускат чунăма,
Ан парччĕ ăна сивĕнме, чулланма.

1927.

САПКА ЮРРИ

Çĕмĕрт йывăç сиктĕрмиччĕ,
Пилеш йывăç пĕкечи.
Хурама хуппи сăпки те
Урттăш йывăçăн çекли.

Çиелте çĕтек шăналăк,
Улача кипке айра.
Çапла ӳснĕ, аталаннă
Эпĕр кив саманара.

Эс, телейлĕ саманашăн
Утленсе çуралнăскер,
Эс тӳшек çинче çывратăн,
Манăн пĕчĕк пионер!

Çийӳнти вителĕк мамăк,
Аюнта сан катан пир.
Ӳс, чиперĕм! Пулăн хамăр
Колхозра эс бригадир.

Ĕçӳнте, хама хурсассăн,
Вут кăларăн яланах.

Мускава та кайса курăн,
Курăн аслă Ленина.

Пур ялйышсенчен пуçтайăн
Эс манми Мавзолее.
Алă парĕ сана Сталин
Ырлăха та телее.

Кăкăру çинче тен çунĕ,
Çунĕ чаплă орден сан.
Ялти сарă хĕрсен чунĕ
Çунĕ саншăн ăванса.

Унтан Хĕрлĕ Çара кайăн,
Пулăн паттăр лейтенант.
Тупă пулĕ сан комбайн,
Трактăру сан пулĕ танк.

Пулăн харсăр парашутçă.
Вĕçĕн çичçăлтăрпа тан.
Тăшмана култарас çук-çке
Вăрçăра эс хăвăнтан.

Ӳс, маттурăм! Çывăратăн
Халлĕхе пĕр ним пĕлми,
Ăрăскаллă самананăн
Ăрăскаллă этемми!

1936.

ТАВТАПУҪ

Тавтапуҫ сана, юратнă Сталин!
Сан тивлетӳпе эпир пуян.
Чăваш халăхĕ, ыттипе танлăн,
Саламлать сана пĕтĕм чунтан.

Тавтапуҫ, ĕҫлев тĕнчин ҫулпуҫĕ!
Сан ăсхалупа ҫĕршыв тӳлек.
Халь пире пур алăк та яр уҫă,
Шухăшсем хăпарчĕҫĕ ҫӳле.

Тавтапуҫ сана, пур халăх тусĕ!
Пур йăхсем те халĕ тăванла
Алла-аллăн тытăнчĕҫ Союзăн,
Ҫав тăванлăх ҫирĕп санпала.

Тавтапуҫ сана, чи аслă маршал!
Сан хастарупа эпир хастар.
Ҫак телейлĕ, ҫутă саманашăн
Пĕр салтак пекех тăратпăр кар.

Тавтапуҫ, Ҫĕр кĕтнĕ Улăп-паттăр,
Тав, ытарайми вĕрентекен!

21500
Центр. Библиотека

Саншăн пурте пуç хумашкăн хатĕр—
Ална çеç кăлар эс хĕвӳнтен.

Мавзолей умпе иртетпĕр танлăн.
Кан, Ильич: ĕç шанчăклă алра.
Тавтапуç сана, мухтавлă Сталин!—
Тĕнчипех янра, янра, янра!

1935.

II

СУЛМАК

ИРЁК ТИМЁРҪЁ

Вăйлă кăкăрăм
Ҫăмăллăн сывлать.
Хăнăхнă аллăм
Пĕрмаях шаккать;
Шаккать те ватать
Асап сăнчăрне,
Ҫĕнĕрен хывать
Тĕнче никĕсне.

Ҫӳлерех ҫĕклен,
Ирĕк мăлатук!
Сана хĕсĕрлен
Урăх чĕрлес ҫук.

Хĕҫпе-пăшалпа
Тухрăм эп вăрҫа;
Юнпа, ҫулăмпа
Хăртрăм харамҫа.
Хĕрлĕ ялава
Ҫӳле ҫĕклерĕм.
Ултав-ылхава
Виртпе кĕллерĕм.

Ҫӳлерех ҫĕклен,
Ирĕк мăлатук!

Сана хĕсĕрлен
Урăх чĕрлес çук.

Аслă вĕркĕчре
Вăй-хăват улать,
Пĕтĕм тĕнчере
Кăвар ялкăшать.

Тăхта-ха пăртак—
Çулăм явăнĕ;
Вут юпа татах
Хыпĕ те çунĕ.

Çӳлерех çĕклен,
Ирĕк мăлатук!
Сана хĕсĕрлен
Урăх чĕрлес çук.

Хĕп-хĕрлĕ сунтал
Хĕлхем сирпĕтет.
Ĕççыннин вăй-хал
Ӳсет те ӳсет.
Хытăрах янра,
Çĕнтерӳ юрри!
Пĕтĕм çĕр тавра
Пĕттĕр мул хурри!

Çӳлерех çĕклен,
Ирĕк мăлатук!
Сана хĕсĕрлен
Урăх чĕрлес çук.

1924.

САМАНА

Тӗтӗмпе тӗтӗрен хура пӳртӗн
Иртсе кайрӗ айван ӗмӗрӗ.
Яла час урăхла урам кӳртӗн,
Пӳрт ăшне урăх çутă кӗрӗ.

Хăйчикки тахçанах çунса сӳнчӗ,
Хускалмасăр выртать вăл лаçра.
Куçăхсан сиплекен кăмпа ӳчӗ
Шанса ларчӗ ӗнтӗ лачăрах.

Киремет хыçӗнче хурамаччӗ,
Йӗрӗхсем илешен мăн турат.
Халь пӗри те унтан хăрамаççӗ,
Иртнӗ чух пăрахмаççӗ нухрат.

Шурăмпуç урăхла кăвакарчӗ,
Хурçă майлă паян шурăмпуç.
Çырупа улшăнать кӗтӳ карчӗ,
Тутăхса çӗршӗнет сухапуç.

Уйсенче урăхла ут кӗçенӗ,
Каçăртса хăрăмланнă пуçне.

Сӳсмен тивнӗ кӗсрен ӳт кӗсенӗ
Тин тӳрленӗ вара ун чухне.

Çăвархланӗ çил-тăвăл хастарӗ,
Хăй тӗллӗн кӗрлес çук шыв сикки.
Пур вăя та этем пăхăнтарӗ,
Пур хăватăн та пулӗ чикки.

1925.

АВТОНОМИСЕН МАРШЁ

Чăваш-и, вырăс-и, тутар-и,
Мёнпурё пёр çăлтăр айне!
Пётём Союзăмăр—ударник,
Утать социализм патне!

Пёрре, иккё, виççё, тăваттă...
Çит бригадăна, бригада!

Атя, республёкём, яра пар:
Хуçи те ху, хăни те ху.
Ану çинче кёрлетёр трактор,
Тёп пултăр выçă виç пуссу.

Вăрăм курăк патăр улăх,
Тырă-пулă пултăр тулăх.

Ӳсех, ман ирёклё çёршывăм,
Тёреклё пул эс яланах.
Ёçле, тăрăш, кёреш, ан ывăн,
Ан ус юн витнё ялавна.

Пулчё тăвăллă Октябрь;
Пулё, тăвăпăр тата пёр.

Пётём чăмăр çёре пёр харăс—
Ёçлекенсен бригадине!
Унччен хăюллăн тытса кар эс
Тепрер вунçуллăх карттине.

Атьăр пурте алла-аллăн,
Шухăш çирёп, ёмёт—паллă.

Чăваш-и, вырăс-и, тутар-и,
Мёнпурё пёр çăлтăр айне!
Пётём Союзăмăр—ударник,
Утать социализм патне

Пёрре, иккё, виççё, тăваттă...
Çит бригадăна, бригада!

1930.

ÇУНАТ ÇУМНЕ ÇУНАТ

Вут кайăклăн вĕçĕр...
Çеçпĕл Мишши.

Уяр, кăвак тӳпемĕре
Сĕм пĕлĕт хупăрлать.
Чикĕсенчен йӳç çил вĕрет,
Каçать вăрхурахла.
Кĕрле, совет пропеллĕрĕ,
Хăпар эс хурала!

Çунат çумне çунат хушар
Юратнă çĕршыва.
Вут кайăклăн чĕртсе кăвар,
Çĕршыв телей хывать.

Пăрланнă тинĕс çийĕнчен,
Юр ту тăррисенчен
Мотор сассийĕ илтĕнчĕ—
Совет моторĕсен.
Пĕтĕм тĕнче, пĕтĕм тĕнче
Йăлт тĕлĕнчĕ пиртен.

Çунат çумне çунат хушар
Юратнă çĕршыва.
Вут кайăклăн чĕртсе кăвар,
Çĕршыв телей хывать.

Анчах, выç куçлăн, варкăшса,
Тăшман çăханĕсем
Çак пирĕн ĕçлĕ те таса
Куна пăсма вĕçсен—
Тĕкĕсене те шыраса
Тупаймĕçĕ вĕсем!

Çунат çумне çунат хушар
Юратнă çĕршыва.
Вут кайăклăн чĕртсе кăвар,
Çĕршыв телей хывать.

1935.

ЙӖЛТӖРÇӖСЕМ

Тапрантăмăр, кайрăмăр, ушкăнăн, харăс.
Шур юр парăлтаттăр, сив çил вĕртĕрех:
Ниçта, харсăр çамрăклăх, ырмалла мар эс,
Чăмтар кĕртсем витĕр вĕшле-йĕлтĕре!

Çамрăк çĕршывăн
Юн вĕри,
Таптăрччĕ сыввăн
Ун чĕри.

Аван пурăнмашкăн, хаваслӑ халь пурнăç.
Анчах кам ăна хурлăхлас тет паян,
Е кам куçĕсем ыранҫи куна курмĕç—
Ан тухтăр та пирĕнпеле çав наян.

Вĕлтĕр те вĕлтĕр
Юр вĕçет.
Йĕлтĕр пек ĕлкĕр
Пур ĕçе.

Мухтавлӑ та орденлӑ пирĕн республĕк
Тăван халăхсен аслӑ йышĕпелен,

Поход кĕввине илтсенех, хатĕр пулĕ
Тăмашкăн карах Советсен çĕрĕшĕн.

Тек лере антăх
Çил-тăман,—
Эпĕр нихçан та
Аптраман.

Кĕçентĕр кăна Ворошиловăн учĕ,
Сас патăр кăна савнă маршал пире—
Кирек хăш чикке ярăнтарăпăр уççăн
Штыксен çуттипе çутатса çулйĕре.

Утăр хăюллăн,
Маршпала.
Финиш—Коммуна,
Малалла!

1935.

УРАМПА УТСЕМ ИРТЕÇÇЕ

Урампа утсем иртеççе,
Утсерен—яш йĕкĕтсем.
Картуссем çинче çиçеççе
Çăлтăрсем хĕлхемленсе.

Тапкăчсем чăнкăртатаççе,
Çĕн йĕнерĕ сиктерет.
Хирĕç тухнă хĕр-ипраçĕ—
Пурте пек вунçиччĕре.

Сывă пулăр! Чипер кайăр!
Тăшмансем тĕп пулччĕрччĕ!
Ташлать тимĕр-кăвак ăйăр
Эскадронăн пуçĕнче.

Хĕрсем алтутри силлеççе,
Тыттараççе чечексем.
Тĕслĕрен хăю çивтлеççе
Ут çилхи çумне чиксе.

Йĕкĕтсем куçпа шыраççе
Пĕлĕш-тантăшĕсене;

Саламсем парса пыраççĕ,
Ырлăхпа телей сĕнеç:

„Сывă пулăр та пур пулăр!
Перекет колхоз халне!
Хам савни тĕрленĕ тутăр
Килтĕрех хампа калле...“

Сывлăша çурайрĕ музăк,
Лашасен хăлхи чанках.
Уй хапхи ĕнтĕ яр уçă,
Такан кĕвĕлĕн чанккать.

Чипер юлăр! Чипер кайăр!
Тăшмансем тĕп пулччĕрччĕ!..
Тапса сикрĕ кăвак ăйăр
Эскадронăн пуçĕнче.

1936.

ПУЛ ПРИМЕРЛĂ ЛЕНИНÇĂ

Чĕре хăйраннă хĕç иккен,
Кăкăр сӳнми вучах пулсан,
Епле хаяр пиçен-кикен
Ан хăрăнтăр эсир пуссан!

Куçсем—мăшăр çăлтăр çунать,
Тӳпен чи çывăх çăлтăрĕ.
Пăхсан чĕрхал кӳртет чуна,
Çухалнă шанчăк ялтăрĕ.

Аван юнгштурм тăхăнма,
Хисеп—çаксассăн КИМ палли.—
Шалтан тĕреклĕлет хăвна
Малашнехи штурмсем валли!

Республикĕн пĕтмен ĕçĕ—
Тулта, пӳртре, çулла, хĕлле.
Эс пул примерлă ленинçă:
Вĕрен, вĕрент, ĕçле, тĕлле.

Вĕрен çĕнĕ этем пулма,
Вĕрент ӳсен шăллусене.
Ĕçре пиçсе хытар хулна,
Кĕрешĕве чăмса çĕнел.

Тăшманăн тупписемшĕн халь
Совет çĕрĕ пулсассăн тĕл—

Патронлă пултăр сан тăха,
Пулемета пусмашкăн пĕл.

Ют хум çĕлен пек симĕсĕн
Çыранăмăр çине шусан—
Хĕрлĕ карапла тинĕсĕн
Мĕльюнлă шефĕ эс, ан ман.

„Илле пророк лашипеле“
Ильич çутти тавлашнă чух
Ак тепĕр ĕç шефа илет
Хастарлă Комсомол ку çул:

Тусем ватма та чей чĕртме,
Кĕпер хывма, çу уçлама,
Вакун туртма та пир тĕртме
Кӳлер электăр-çулăма.

Советсемпе электăра
Хушсассăн—коммунизм вăл.
Задача йывăр пек тăрать,
Анчах хăçан çĕнни çăмăл?

Хули-ялне хăть кăнтăрла,
Хăть каçхине пĕр сăн кӳртме—
Малтан хăвна электăрла,
Хуса кăлар сив тĕттĕме.

Республикĕн пĕтмен ĕçĕ—
Тулта, пӳртре, çулла, хĕлле.
Эс пул примерлă ленинçă:
Вĕрен, вĕрент, ĕçле, тĕлле!

1931.

III

ТИВĔÇЛИСЕНЕ

СĂВĂÇ

Пуç мимминче туптаса
  Сăмах хывиччен —
Чун-чĕрӳпе çунăхса
  Чылай кĕлленен.

Сăвву-юрру çынсене
  Виттĕрех тесен —
Ăна, чернил вырăнне,
  Юнупа тĕрлен.

Вулакана вут-кăвар
  Хыптарам тесен —
Хут çине, саспалли мар,
  Хĕлхем сирпĕтен.

Ак—поэтăн ĕмĕрех
  Тапакан чĕри.
Поэт пулма çав терех
  Ансат тетĕр-и?

1924.

ГАРСИА ЛОРККА

Плачь, Муза, плачь...
А. Пушкин.

Эп сана нихăçан та курман,
Итлемен эпĕ сан юрруна та.
Çав-çавах сан сăну халь пур ман,
Эсĕ ман чĕрере пурăнатăн.

Сан паха çĕршыву—çĕн Испани
Сана чĕртĕ виç хут, пĕрре мар.
Тумлам юн таранччен эсĕ панă
Унăн ирĕклĕхне упрама.

Сан йыхравă каять тавралла,
Сан тăван музусем пур çĕрте те.
Сан юнланнă ялавупала
Юлашки сăввуна эп çĕклетĕп.

Макăр, Муза, хŭхле! Пĕлтĕн, куртăн —
Кам сан пуçкăшăлне таптакан.
Ерт эс халăх çарне паттăр Лорккăн
Парăнми юррине аттака.

Эсĕ куртăн—ачалла хĕрарăм
Какăрне касакан палача;

Бомбăсен сассипе эс анрарăн,
Штык вĕçне тирĕнет ав ача.

Мăшкăлланнă хĕрсем макăраççĕ,
Вăтанаççĕ пăхма çын çине.
Макăр, Муза, хŭхле! Чĕрĕ Гарсиа
Çиллипе хутăштар куççулне...

Чĕрĕ эс! Тыткăнланнă Гренада
Çапса ватĕ тăшман сăнчăрне.
Ху çинчен те, хăвăн юрруна та
Савса юрлĕç ĕмĕр-ĕмĕрне.

Эп сана нихăçан та курман,
Ĕмĕрлĕх ак паллатăп халь тин.
Анчах ман чĕрере эс пурнан,
Харсăр юрăç, салтак, гражданин!

ХАДИ ТАКТАША АСАНСА

Ханамçăм! Хăçан-ха, хăçан эсĕ килĕн?
Кĕтет кĕрекем. Сана парăм та пур кăшт...
Мĕнле кулепесĕр те тĕссĕр çке вилĕм!
Мĕнле сăн-сăпатлă та тулăх чĕр пурнăç!

Тиф ернĕ. Ăçтан кун пек проза тавраш?
Шупкалчĕ малтан умри ТАСС телеграмĕ,
Унтан вăл хуралчĕ: Хади Такташ...
Епле-ха сана, епле чĕмсĕр курам эп?

Эс ĕмĕтленеттĕн вилме капла мар,
Сивлеттĕн пур нишлĕ хăравçăсене:
— Лутра „Англетер“ маччинчен вĕт капмар
Пĕр-пĕр Миссолонг лачаки... — теттĕн эс.

Тĕреклĕ ларатчĕ сан демăну—Байрон
Тăвăл умĕнли пĕлĕт тĕслĕ куçра.
Епле килĕшу́сĕр, йăвашшăн эс кайрăн
Пулсан та, сана эп пáлхавçăн усрап.

Аваллăх Хусан ху́мисем чĕтĕретчĕç
Сан уçă сассу çапăнсассăн çиллес.

Сана çамрăксем алă вĕççĕн çеклетчĕç,
Эп те вĕсемпеччĕ, сисеттĕн-ши эс?

Кайран тĕлпулаттăмăр иксĕмĕр эпĕр
Бильярд сĕтелли умĕнче, лотора.
Азартлă вăйăç! Ху чапна эс пĕлмесĕр,
Унчух тен ăмсаннă ăста партнера.

Пăшал пек тирпейлĕн тытаттăн эс кий:
„Туза сулахай кĕтессе!.“ Çук, чăммарĕ.
Е симĕс анан курăнми тĕмески
Пăрать-и шара? Е пустав яка мар-и?..

Эс ĕмĕтленеттĕн вилме урăхла.
Сан пурнăç курки тулаймарĕ çурри те.
Çампа эп те саншăн паян хурлăхлă:
Ĕпле юрăçне пытарать-ши юрри?! — теп.

Анчах юрăçи юррине пытарни —
Тата хурлăрах тамаша тĕнчере.
Апла пулас марччĕ! Кунçул—ытарми,
А юрă... ытараймирех тен пире.

Шанатăп: çĕршыв кĕнекин варнех кӳртĕ
Сана сан юрру. Пăхкалуçăн уçса,
Çынсем яланах ватăлми курĕç пурте
Тăвăл умĕнхи пĕлĕт тĕслĕ куçа.

1931.
Тбилиси.

ÇЕÇПЁЛ МИШШИНЕ

Тăван çĕршыв вăрманĕнчен
Юр кайсан, тирпейлĕн
Эс тухрăн, малтанхи чечек,
Тухрăн та... типейрĕн!

Таса ире, вут хĕвеле
Тайăлса тухсаттăн;
Пин-пин чĕре кĕввипеле
Ирĕке мухтарăн.

Хăтарăннă йăхсемĕршĕн
Ăмăртла эс вĕçрĕн,
Ылханлă тĕттĕм ĕмĕршĕн
Куççульпе эс йĕртрĕн.

Чăваш чĕлхин ĕмĕчĕсем
Саншăн пурнăç пулчĕç;
Санпа пĕрле пайтах вĕсем
Таврăими, тен, юлчĕç...

Мĕншĕн вăхăтсăр шанса,
Хăрăнса эс ӳкрĕн,

Мĕншĕн ĕмĕтне татса,
Ху кунна ху пӳкрĕн?

Пиртен инçе пĕр пĕччене
Кам сана шеллерĕ?
Кам юлашки юррусене
Хурланса итлерĕ?

Аюх! Калаймăн эсĕ халь:
Чĕмсĕрлентĕн харăс.
Тапмасть пин-пин чĕреллĕ хал,
Ĕçлемест хастар ăс.

Анчах лăплан, йыхравçăмăр,
Ĕмĕтӳ сан çитĕ:
Сан ӳкĕтне ăнлантăмăр
Вăл пурне те витĕ!

Нихçан, нихçан кĕлленес çук
Таса чун кăварĕ.
Вутчулĕ пек ăна кун-çул
Ĕмĕре хăварĕ.

Чĕлхен килес тимĕрçисен
Туптавçи, çав чулăн
Хĕррисене тивмессерен,
Ялкăштарĕ çулăм.

1926.

С. ЭЛЬГЕРЕ

Йĕс таканлă тимĕр-кăвак ут
Такăнминччĕ çурма çул юртсассăн.
Ялкăшинччĕ чунăм тепĕр хут,
Сивĕнминччĕ сăвăра пĕр саншăн.

Ăнланатăп: эс кăшт çиленен,
Мана хытă ӳпкелетĕн пулĕ.
Эп чĕнмерĕм... Каçарах, пиччем!
Çырупа çеç мар-çке кăмăл тулĕ.

Юрататăн эс тăван уя,
Атăла чунна памашкăн хатĕр.
Пуклак пуçлă тупăлха туя
Час-часах сана ертсе тухать-тĕр.

Эс çӳретĕн пулĕ пĕр пĕччен
Тăнăçра ӳсет çав пысăк шухăш.
Каçпала пĕр авăк, тĕттĕмччен,
Пур юмах та, пурăнăç та—хутăш.

Вак ĕшнеллĕ лăпкă вăрмана
Эс кĕретĕн уйăх хăпарсассăн.
Вăрман урлă алă пар мана,—
Уçăрах янратăр манăн сассăм!

1927.

БАЙРОН

Кам савнă, ачашланă-ши
Ача чухне ăна, мăнтарăн,
Хăйне çуратнă амăшĕ
„Уксах“ тесе мăшкăлласассăн?

Кам колледжре ăна юп курнă?
Ытарайми хĕр Чевăрт Мери,
Пĕрремĕш чунсавнийĕ унăн,
Ăна „уксах ача“ çеç терĕ!

Ялан çак тансăрлăхран урнă,
Ялан ӳпкевлĕн çуннă вăл.
Уксахскерех Геллеспонт урлă
Ишсе каçтарнă мăнкăмăл.

Сăнтан хитре, ӳтрен чăтуллă.
Кембридж университетне
Чунпа вăл темĕн анлăш хурлăх,
Сив ютшăну илсе кĕнĕ.

Улпут студентăн кун иртет мĕн
Вĕреннинчен питрех—ĕçсе.

Анчах пулас поэт тирпейлĕн
Çырать „Ерçӳллĕ сехетсем“.

Лордсен палаттинче ун вырăн,
Анчах тус хушшинче пĕччен
Пулас шăпа сунмасть пек ырă...
Çук! Çĕрĕк чунлă çынсенчен—

Аяккарах, курман-илтмен çĕр
Хушшинелле кĕрсе çухал:
Вăл, Англие ик çул килмесĕр,
Вăтаçĕр тинĕспе юхать.

Яш куçсенче хĕвел кулсассăн,
Тăван çĕршыв тĕтри тем мар:
Вăл таврăнать. Пĕр ир ун каскăн
Сассийĕ, хăй тăнă-тăман,

Этемлĕх хăлхине ак çапрĕ.
Шавлать, чăшăлтатать, кĕрлет
Поэтăн харсăр хумлă чапĕ
Салху „Чайльд-Гарольдпа“ пĕрле.

Халь уншăн уçăлчĕ пур алăк.
Сасартăк, пурнăç çитнĕ пек,
Вăл авланать: юлташлăн алă
Парать хĕр Анабель Мильбенк.

Пурнаççĕ çын пекех. Асра та
Çук иртнĕ канăççăрлăх ун.

Тӳлек вăл. Çуралать хĕр Ада...
Анчах сăвă çеç мар-çке чун!

Сăвву санран килет: аватăн—
Хăш майлă кирлĕ, ачуна
Кĕвĕçӳпе элек авать мĕн,
Вăл çын кышлавĕнче çунать.

Вăрттăн çын çийĕвĕ, суялăх
Чапа нихçан та каçарман.
„Ак çакăн пек пул, ак ку лайăх"
Сĕнет хăй идăлне айван.

Юлашки хут пĕлĕшсĕр, туссăр,
Савнисĕр юлнă поэта
Ёмĕрлĕхех хăваççĕ суккăр
Филистерсем ак Лондăнтан.

Женев кӳлли. Альп тăвĕсем.
Хăй пек хуса кăларнă Шелли.
Кама, мĕне халь хĕрхенсе
Йĕрес? Е хывнă сăнчăр шел-и?

Вăл кунĕ-кунĕпе тулта,
Çук кĕвĕç, тăшмансен элекĕ...
Чуна хайăран салхулăх та—
Халь çăмăл хурлăх çеç. Элеги.

Вăл килĕшес тет пурнăçпа,
Пантеистланнă Шелли евĕр.

Куллен вăл хатĕр курнăçма
Пур инкекпе те пĕр ӳпкевсĕр.

Анчах çав канлĕхе кĕрет
Хĕрхӳ асаилӳ... Хăруша.
Ун çуралать пĕччен „Манфред“—
Сĕм хураран та хура шухăш.

*

Уяв. Пĕр вĕçсĕр карнавал.
Юрлать те сиккелет Венеци...
Хăçантанпа шыранă вăл,
Хăçантанпа ĕмĕтленетчĕ

Çак ирĕк сисĕмлĕ, тулли,
Чĕрĕ çынсем пек пурăнмашкăн!
Манфред хуйхи Беппо кулли
Ăшне путать, çĕрпе çырлахнăн.

Вăл вăтăрта. Мĕн мăнкăмăл,
Кунçул пур сĕткене сăхать тĕк?
Ун пурнăçĕ—выляв; çăмăл,
Минутлăх Мариан Сегати.

Телей! Тен çак ытахальтен
Юратнă Маргарит-тăр эсĕ?
Эс ватă граф мăшри пуль тен—
Мулпа çырлахайман Тереза?

Хăшĕ пĕртен пĕр вĕсенчен?
Хăшĕ яш шухăш чун хаваллĕн
Шыранă, йыхарнă—чечен,
Тивлетлĕ хĕр? Хăшĕ вăл халĕ?

„Хĕрарăм—чи хăрушă чун:
Унпа та, унсăр та пурнаймăн".
Ак халь мĕн тăрса юлнă ун,
Чи аслă чĕрĕ Дон-Жуанăн.

Уяв. Пĕр вĕçсĕр карнавал.
Венеци çунатланнă мар-и?
Анчах унтан та тарнă вăл—
Поэт, пăлхавçă, карбонари.

Кăмрăкçăсем чĕртен хĕлхем
Мантарнă лордлăха пĕр ушкăн.
Итали ирĕкĕ! Пĕтĕм
Поэзи çаванта халь уншăн.

Телейлĕ эс, тӳлек кӳлле
Хĕрпе кĕсменличчен, хастаррăн—
Чĕре тумне ярса йӳле—
Чару пĕлмен пуçтах корсарăн

Хумханнă тинĕс варнелле
Ишсе кĕрсессĕн çавраçиллĕн!
Çав çеç, пĕр çавă парнелет
Çынна чăн юрату та çилĕ.

4. Сăвăсемпе поэмăсем.

*

Пĕлни вăл, Мисолонги шурĕн
Лачакинче сив чир лексе, . . .
Хĕм юнлăн мар—шупкан, шап-шурран
Юлашки хут чĕтренессе?

Хула ют тыткăнра. Эллада!
Эс çак çар тумĕсĕр, çынра
Хастар йыхравçуна паллатăн,
Сана вăл ирĕке йыхрать.

„Хускалăр, чурасем, хускалăр!
Анланăр: хăвăрсăр сире
Никам, нимле хăват ку тапхăр
Çалаймĕ хăврăн Грецире".

. . . . . .

Çĕршывĕ ун—тĕнче, сисеп эп,
Тăшмаиĕ тĕрĕк мар—чуралăх.
Мĕне ăна çарпуç хисепĕ?
Ăна пĕр ирĕк пултăр палăк.

1932. Сиктĕрме.

IV

СОНЕТСЕМ

КОМПОЗИТОР ПАТЁНЧЕ

Хирбӳ Кӗркурине.

Çак пӗчӗк пӳлӗме аслӑлатать мӑн шухӑш.
Паха ӗмӗтпелен тухап сан патӑнтан.
Эс тупнӑ кӗвӗсем хастарлӑ та салху кӑшт—
Тӳссе тӑвӑлнисен кӑмӑлӗпе пӗр тан.

Çӑрнай сассипелен хум-шавлӑ Атӑл хутӑш
Йӗрсе те тарӑхса пӑлханнӑ авалтан.
Çавна туятӑп эп: иртни çине ылхан
Шалçи çапас килсе, çунать ман тепӗр хут ӑш.

Янран илем ӑсти! Мӗскер сунам сана?
Чӗнет çӗршывӑмӑр, хӑватлӑ самана:
Юратнӑ халӑхна ӑмӑрт çунат хушсамччӗ.

Шанатӑп, ахаль мар пианину çинчен
Пӑхса ларать, итлет—ху евӗрлех ӗçчен—
Нарспи пек ватӑлми поэтӑн сӑн-сӑпачӗ.

КИМЁПЕ

Ал. Алгана.

Аван-çке Атăл тăрăх кимёпе
Ларса, тупман сăвва хăваламашкăн!
Епле тӳлек... Кётӳ çерçи канашлăн
Каçкӳлём кантăр шёкёлченё пек.

Сасартăк, йăлăмран тухса йёпе
Ама çилсем пёлёт хуса каçсассăн,
Ну пуçланать вара!—çири кёпе
Тарпа тăварланать—хума касатăн.

Ăмăртăва тăратăн куçма-куç.
Рифма манса, калатăн: тавтапуç!
Ак пурнăçăн ылмашлă пёр саккунё:

Лăпкать те ачашлать; лăкать, туллать;
Кёсмен тивсе пӳрнесене юн хӳнё,
Анчах ишев тёреклетет хула.

КУРНĂÇУ

Л. Агакова.

Юлташ больницара, хула тулашĕнче.
Пĕлетĕп эп: унта, туп ахăравĕ хыççăн,
Сасартăк лăпланса тăвăрланать тĕнче;
Хаçат листи çине куççем тăрнаççĕ выççăн.

Çăмăл суранлисем лараççĕ иккĕн-виççĕн,
Выляççĕ шашкăлла, пуплеççĕ тем çинчен.
Аманнă урипе уксахласа, пĕччен
Анать чăваш ачи—хавас такам килнишĕн.

Пăхать. Кĕтмен. Пĕлмен. Виç çул курманччĕ пулĕ.
Кащнин расна сукмак. Анчах вăрçă вăрçах.
Шур тутăр ăшĕнчен кăларчĕ шĕвĕр пульă.

Усрать: калла ăна парасшăн тавăрса!
Кĕтмен çĕртен татах тĕнче кисренĕ пĕр.
Паян çĕнтертĕмĕр. Ыран—çĕнтерĕпĕр.

1940. Ленинград.

V

ХАМĂР ЯЛСЕМ

ЭЛЬТИВАН ПИЧЧЕ

Эльтиван старик, ял-пуçĕ,
Тăхăрвунă тăххăртан
Иртнĕскер, кăçал хур пулчĕ:
Вилчĕ кайрĕ ăнсăртран.

Яланах умра халь çав сăн:
Шур сухал, кăвак сăкман;
Пуçĕнче пĕр сар ялккас ун,
Йăваланăскер çăмран;

„Шĕлепке“, теме пулать те—
Çук, усрать авалхине.
Сăкманне вăл „япламат“ тет
(Кам пĕлет мĕн сăмахне!)

Эльтиван хуралçă, тетчĕç,
Хăйне эп астăвасса.
Ёмĕрех вăл ирттеретчĕ
Уй-хапхи панче ларса.

Тыр вырма çын кустарать-и,
Хăнана е пасара—

Пуç тайсах уçса яратчĕ
Эльтиван пичче вара.

Ял-йышсем-и, ют ялсем-и,
Юланут е урапа—
Вăл пурне те кăмăлçемĕн
Асататчĕ ырăпа:

— Çӳрес çулăр çăмăл пултăр,
Çитес çĕрĕр çывăх пултăр,
Лайăх тавраиăр!—тесе
Кăларатчĕ пиллесе.

Урапа пăти тухасшăн
Лăканса пырать пулсан,
Шаккатчех вăл, сăнасассăн,
Аллинчи туяпалан.

Ваттисем мухтатчĕç: ахăр,
Качака та халиччен
Каскăн шухăшлăн тухман-тăр
Эльтиванăн хапхинчен.

Выльăхсем алла кĕрсессĕн,
Яла юр хӳсе кайсан,—
Тек хупмастчĕ вара мĕскĕн
Хапхине ват Эльтиван.

Ґапă, мăйкăç хатĕрлетчĕ,
Каркалатчĕ серепе.
Хĕлĕпе мĕшĕлтететчĕ
Тĕрлĕ кайăк йĕрĕпе.

Анкарти тăрăх килетчĕ
Пĕрер юс çака-çака.
„Сунарçи çапла-çке,—тетчĕ,—
Каяймастăп аякка“.

Каçпала тулатчĕ халăх
Ун патне „суя суйма“.
Пур старикĕн юптармалăх,
Чăн сăмахĕ те нумай.

Тĕрĕкпе вăл вăрçнă пулнă,
Эльтиван пичче—салтак.
Асăнмалăх чĕлĕм юлнă,
Ун пек чĕлĕм çук ялта.

Тĕрлесе пĕтернĕ, шурă,
Пӳлĕм-пӳлĕм кĕленче;
Чăпăкĕ пĕр аршăн çурă—
Кипарис йывăççинчен.

Тĕтĕмĕ тухать шыв витĕр,
Пĕртте, имĕш, йӳçĕ мар.
Чашкăратчĕ вара чиксĕр,
Каснă-лартнă—сăмавар.

Кил хуçи пĕр-иккĕ селĕм
Сывласа илетчĕ те,
Çаврăнатчĕ чапла чĕлĕм
Йĕркипе пĕтĕм пӳрте.

Ватă паттăр тапрататчĕ
Хăй курни-илтни çинчен.
Хĕрнĕçем хĕрсе, яш каччăн
Такмаклатчĕ хушшинчен:

„Саркамăшри тĕрĕксем
Чĕл(ĕ)м паккаса выртаççĕ:
— Кунта вырăс салтаксем
Килес çук-ха,—тееççĕ.

Çав самантрах вырăссем
Переççĕ те çитеççĕ.—
Чĕлĕмçĕсем-тĕрĕксем
Юн пĕрĕхсе тараççĕ...“

Вилчĕ хай хастар такмакçă.
Колхозсем чăмăртансан,
Сăнаса пăхсан пăртакçă,
Кĕнĕччĕ вăл колхоза.

Вăл каларĕ: „Çитрĕ тапхăр...
Куртăм сакăр самана.
Пурăнса ирттертĕм, ахăр,
Виç-тăватă патшана.

Выльăх-чĕрлĕхĕм—пĕр анчăк,
Эп тытман ут чĕлпĕрне,
Хăй ĕмĕрĕнче ман карчăк
Кукленмен ĕне айне.

Килĕм-çуртăм—хурал пӳрчĕ,
Кив капан—халлап-юмах.
Пĕтĕм ырлăх—чĕлĕм пурччĕ,
Вăл та шăтрĕ, хăямат!..

Çитрĕ тапхăр, тетĕп эпĕ,
Халăхран епле юлам?
Колхозра этем хисепĕ
Хăпарать, куратăп хам.

Пĕчĕк чух пире хистетчĕç:
Йĕре-йĕре ĕçлекен
Кула-кула çиет,—тетчĕç;
Халь, пăхан та, тĕлĕнен.

Утса мар, ларсах акаççĕ,
Пилĕке хуçмасть çурла.
Ку чухне ӳсен хĕр-каччă
Ĕç тăвать юрла-юрла...

Çитрĕ тапхăр... Кунăм-çулăм
Нумаях юлман та ман,
Кам пĕлет, тен кирлĕ пулăп...“—
Терĕ ватă Эльтиван.

Колхоза кĕни сасартăк
Урăхлатнăччĕ ватта.
Ун шайне тăмашкăн çамрăк
Йĕкĕт кирлĕччĕ ялта!

Сăмаха пит васкамасăр,
Еррипе, хăй мелĕпе,
Темĕн чухлĕ кăпăр-капăр
Ĕç тăватчĕ хĕлĕпе.

Е явать турта пăявĕ,
Е шăналăк йĕпсисем
Хатĕрлетчĕ, тулă лавĕ
Йышлă пуласса сиссе,

Армана та, витене те
Çаврăнатчĕ кунĕпе,—
Хăй аллипеле пурне те
Хыпаласшăн çуннă пек.

Çур енне, машин сарайĕ
Ремонта хапха уçсан,
Трактăрсем панче сайра эп
Эльтиван сăнне курман.

Вăл пăхатчĕ пит вăрахăн,
Чĕлĕмĕ сӳничченех,
Урăм-сурăм урхамахăн
Вутлă куçĕсем çине.

Кам пĕлег ун чух ун пуçĕ
Мĕскерпе сĕмленнине,
Кам пĕлет мĕн чухлĕ йӳçĕ
Асилӳ вĕркенине!...

Тĕл пулатчĕ председатель:
— Эльтиван пичче, мĕн халь?
Эс çак пирĕн чухлаканччĕ,
Тырă пулĕ-ши кăçал?

„Хĕлĕмĕр тăманла. Хулăн.
Пур шанмалăх, шăллăм, пур.
Килĕшет вăл хумăн-хумăн
Хирсенче выртсассăн юр...“

Çуркунне, çĕршыв типсессĕн,
Эльтиван пичче вара,
Тырăсен халне пĕлесшĕн,
Çаврăнатчĕ хир тавра.

Тем сарлакăш, пĕр йăрансăр
Ешĕл уçăм пуссипе
Вăл çӳретчĕ васкамасăр,
Танлăн, çĕрĕн хуçи пек...

Вилчĕ пирĕн ват чухлавçă,
Районран пĕр çын килсен:
„Ветеран“, тесе хăварчĕ
Эльтиван пичче çинчен.

„Музыкпа“ пытарăр,—тенĕ,
Харсăр паттăр,—салтакла,
Çĕклесе анах çĕшенĕр,
Ăсанам машинпала“.

Старике çуса вырттарчĕç
Ултуралла тупăка;
Аллине чĕлĕм тыттарчĕç,
Хушнă, имĕш, хăй çапла.

„Чăпăкĕ кĕскелнĕ темĕн,—
Терĕç ватă ял-йышсем,—
Лартса парĕç-ха çитсессĕн
Леш-хайхи саркамăшсем“.

Грузовик çине хурайрĕç,
Çĕр çулхи ветерана.
Сакăр купăс ячĕç харăс:
„Çăлтăр витĕр çул курнать...“

Эльтиван пичче юратнă
Пуринчен те çав юрра.
Хăй иккен ăна юрланă
Салтакра, таçта ютра.

Кăршĕ ял ăсти, ун варлă
Тусĕ—шăпарçă Кĕлпук
„Ĕрçерум кĕвви“ каларĕ
Шăтăка антарнă чух.

Ахăртса та, макăртса та,
Пĕр йĕртсе, ĕсĕклетсе,

Кĕвĕлерĕ вăл чи ватă
Тантăшне хисеплесе.

Хушăран, хăмпа вăр-варрăн
Ывăтса яра-яра,
Куçпăван асамăç халлăн
Калаттарчĕ сывлăшра.

Тупăка антарчĕç; лартрĕç—
Çырусем картса—юпа.
Тăприне снксе таптарĕç
Путмасса кĕрпе-çурпа.

Шăпăрçă Кĕлпук, темскершĕн,
Сухалне çыртса вара
Виççĕ çаврăнчĕ пĕр шеппĕн
Вилтăпри йĕри-тавра:

„Пархатарлă çыннчĕ,—терĕ,—
Çăмăл пултăрччĕ тăпри!
Учĕне шăмми ун çĕрĕ,
Ырă ячĕ юлтăр-и!..“

Чăн: çынна хуралçă тетчĕç:
Еç—пăрахăç мар; çапах
Хушамачĕ мĕскĕн пекчĕ,
Кăренăллĕччĕ. Анчах

„Эльтиван хапхи“ тееççĕ
Халь ялти пĕр хапхана,
Хăй çинчен ĕнтĕ пуплеççĕ
Ветеран, тесе кăна.

1940.

КАРПА-ВАҪУК—ПЁВЕВҪЁ

Кам илтмен? Карпа—пёвевҫё,
Чаплă ҫын вăл тахҫантан.
Тёпчесе ыйтса килеҫҫё
Ун патне таҫтан-таҫтан.

Кил-карташё пушă, чухăн,
Хура пӳрт те ҫёр урай,
Хатёр-матёрё те ҫук ун,
Тарҫăра ҫӳрет пёрмай.

Ăмăртса ăна тытаҫҫё
Ик пуян—пёвев хуҫи.
Урăх ҫук ун пек ăстаҫă,
Пурҫăн пек тухать сӳс ҫип.

Нихăҫан вăл чикнё хутăр
Тёскаймасть улачаран.
— Чёлхине пёлет-тёр, пур-тăр,—
Теҫҫё арăмсем вара.

Йӳҫётет краска вăл, имёш,
Пёр тымар сёткенёпе.
Пултăр хёрлё, сарă, симёс—
Ҫётёлсен те ҫёнё пек.

Анчах хăй, Карпа Ваçукĕ,
Юратмасть улачана,
Тăхăнмасть те. Пур-и, çук-и—
Туянать пасартанах.

Çăпата сырмасть нихçан та,
Сăкманпа курман ăна.
Шăлавар, пиншак ун, атă,—
Тăтăр хăть пĕр сум кăна.

Çӳç кастарнă. Сухал хырнă.
Пысăк мар. Хура. Хыткан.
Утмăла хăй çывăхарнă,
Хăй нихçан та авланман.

Ĕçиччен—хăйне хуçа пек—
Пуçтарулла, чыслă çын.
Пĕр ĕçсен каять ун чапĕ,
Япăхать вара саççим.

Хĕрнĕçем хĕрсе, пĕртен пĕр
Такмакне вăл ян ярать:
— Чăвашсем пулса çитетпĕр.
Чăвашсем-çке!—тет вара.

Çав сăмах янрать пит уççăн
Аслă Калăм эрнинче.
Çаруран та çара пуçăн
Ял касать Ваçук пичче.

Пиншакки, атти-масарĕ
Саклатра пĕр-пĕр тĕлте.
— Чăвашсем пулатпăр! Пар-ха
Мухмăра шкаликлĕх...—тет.

Старике параççĕ пурте,
Вăл тӳлет çур пус таран.
Лăплансассăн мухмăр хурчĕ,
Хăй çыннах ятлать вара:

— Мĕскĕн! тет.—Ĕççe яран,—тет
Йышу кĕлĕмçе ерет.
Ман хыçран кайма юрать-и?
Эп пĕччен çут тĕнчере!..—

* * *

Çакăн пек Карпан портречĕ,
Эп ăна курман, çапах
Яланах пуçра çӳретчĕ
Ял астунă сăн-сăпат.

Халчченех аса илеççĕ,
Манăнман пĕччен Ваçук:
— Чăвашсем пулар-ха..—теççĕ
Пичĕке пуçланă чух.

Эп калап хама, сăна-ха,
Вăрăм е вăл кĕскерех—

Кашни çыннăн хăй сăмахĕ,
Хăй юрри пур тĕнчере.

Чун çĕкленнĕ пек пулсассăн,
Ёмĕрех пĕр сăмаха
Çав пĕвевçĕ тем каласшăн
Тарăхса кăшкăрнă-ха?

Ял-йышсем халь шӳт тăваççĕ:
— Тав сана, Карпа!—тесе
Ваттисем сăра тăкаççĕ,
Кăмăлтан хисеплесе.

САНТĂР—ÇĔЛĔК ÇАВРАКАН

Пукравран пуçлатчĕ те—
Мĕн хĕле кĕричченех!
Çаврăнатчĕ вăл пĕтĕм
Ўесри ерминккене.

Кам пĕлмен, кам палламан-тăр?
Таçтанах курнатчĕ Сантăр.

Йăмăх хĕрлĕ тăрнаккай
Тăрăлăччĕ çĕлĕкĕ.
Те ашшех хăварнă-ха,
Те аслашшĕн пиллĕхĕ.

Çĕлĕк кăшăлĕ сăсарччĕ,
Кукшаланнăччĕ пăртакçă.

Тĕссĕрленнĕ сар чаппан,
Кивĕ симĕс пиçиххи.
Типшĕмрех. Яштак. Сăнтан
Темĕн чухлĕ ун пекки.

Пурччĕ ун туйи—шуратнă
Улмуççи, пĕр çĕр туратлă.

Вăл ăна туратсерен
Эрешленĕччĕ касса
Кайăк, йытă е çĕлен
Пуçĕсем ăсталаса;

Чиперех хăшне вăл, латлă—
Шăрçаран куçне те лартнă.

Çав туя çинче вара
Çĕлĕкне çавра-çавра,
Мухтаса ют тавара,
Ян яратчĕ пасара.

Пĕр черккешĕн, пĕр куркашăн
Кăшкăратчĕ вăл кункаçăн:

— Ак хăта кĕсре сутать,
Урхамах тихи кĕсри,
Утмассерен хăм тăвать,
Эй, çынсем! Илтеттĕр-и?

Хакĕ пулĕ пĕр тенкĕ,
Мăкариçĕ — çĕр тенкĕ.

— Ак ĕне, ĕне, ĕне!
Пасарта та урăх çук.
Астусамăр çиллине:
Сутарать тӳрех сар çу.

Хакĕ пулĕ пĕр тенкĕ,
Мăйракишĕн — çĕр тенкĕ... —

Çаврăнать сăсар калпак —
Халь кунта, унтан таçта...
Такмаклать пур кăмăлпа,
Хăй ĕçне савса, ăста.

Кам пĕлет, ĕçки-масарĕ
Тен ăна кирлех те мар-и.

Юратать çын мыскара,
Унсăр тен ăна кичем.
— Акă, акă, — тет вара, —
Аçтăрхан арбузĕсем!

Касрăн пăхрăн — нар хĕр пек,
Тутансассăн — пыл, шерпет.

— Кам пултарĕ хурлама?
Акă вăл çемçе кĕççе!..
— Çарăмсан пулли кама?
Атьăр, халăх, леш вĕçе!

Чĕрĕ пулă—мухмăра,
Вилме кирлĕ мар вара!..

Çаплалла этемччĕ çав
Сантăр—çĕлĕк çавракан,
Кăсăклатчĕ пурнăçа
Хăйне май хайлапалан.

Анчах хăй нихçан та, ахăр,
Виçĕ пуслăх сут туман-тăр.

Тӗлпулан пӗлӗшӗсем,
— Халь аван-и“ вырӑнне,
— Çаврӑнать-и-ха?! — теçе
Чӑмӑртатчӗç аллине.

„Çаврӑнать-ха, — тетчӗ Сантӑр, —
Кускалатпӑр кӑлтӑр-калтӑр.

Çӗр те çаврӑнать тет те,
Пирӗн ма тӗк тӑмалла?
Илӗртетпӗр ӗмӗте,
Иӑпататпӑр кӑмӑла.

Мӗн тӑвайӑн, ӑçта кайӑн?
Çаврӑнатпӑр çиле майӑн...“

Юптаруçӑ Сантӑра
Курманни пайтахчӗ ман.
„Бригадир пулса тӑрап!..
Терӗ вӑл, кӑшт калаçсан.

Хӗпӗртерӗм, тӳсеймерӗм:
— Çаврӑнать-ха эппин!? — терӗм.

„Çитрӗ, — терӗ, — çаврӑнса
Хамӑр, шӑллӑм, халь хуçа.
Каппаймасӑр каласан —
Тавтапуç ку колхоза“.

НАТАЛИ КЁПЕ ТЁРЛЕТ

Натали кёпе тёрлет,
Кам валли
Çав терех хитрелетет
Натали?
Тап-таса юр евёрлё
Шур пире
Хёрлё, симёс çиппеле
Хёр тирет.
Хёрлё пурçăн—яш чёре,
Вёри юн;
Симёсси—вăрман, çерем
Пулё ун.
Сарăпа сенкер хушать
Вăл тёл-тёл.
Ку—уяр, тӳпе пулать,
Хём хёвел.
Хурине те хушшинче
Вăл хурать:
Пурте, имёш, çёр çинче;
Çёр—хура.

Тӗррӗн пур-çке авалтан
Тахçанхи
Ăсти çеç ăнланакан
Хăй чӗлхи.
Çут телей те, сӗм тӗттӗм
Хурлăх та,
Юрату та, ӗмӗт те
Пур унта...
Натали кӗпе тӗрлет,
Кам валли?
Мӗн калать тӗрӗпеле
Натали?
Чикӗрен, инçе Хасан
Патӗнчен,
Илнӗ вăл çыру паян
Савнинчен.
Орден панă мӗн тусне—
Петӗре.
Таврăнас пек кӗркунне
Пӗлтерет.
Пӗрех шухăш Наталин
Пуçӗнче:
„Кӗтни шанчăклă пулин
Юрӗччӗ...
Эпӗр мар çав, тухнă çав
Пит чапла.
Каçăртать пуль-ха пуçа,
Ан шарла!“...

* *
*

Канлĕ мар хĕре питрех:
„Аш вĕçет“.
Аллине йĕппе тирет
Вăл кĕçех.
„Ай, пуççавăрмăш!“ тесе
Пӳрнине
Хыпрĕ, печĕ кĕтессе
Кĕпине.
Кăшт тăрсан, пĕр татăк хут
Илчĕ те,
Çырчĕ вăл çапла çыру
Инçете:
„... Çырам, терĕм шур хута
Хуратса,
Сана, тантăшăм, чунтан
Юратса...
Лавĕпех салам тăван
Колхозран!
Пурăнатпăр-ха аван.
А унтан—
Орден илнĕ ятпалан
Эп сана,
Тытса икĕ хăлхунтан,
Шеп кăна
Чуптăвам пĕрре тата
Чăвашла!..

Хам çинчен çырам пăртак
Малалла.
Пурнăçсем пырать-ха ман,
Аптрамасть.
Çӳрететĕп халь комбайн,
Трактор мар.
Эс сыхлан çĕре унта
Хассанла.
Эп ĕçе ĕçлеп кунта
Стаханла.
Пурте тĕрĕс-тĕкелех
Халличчен...
Тем пекехчĕ кĕрпеле
Эс çитсен.
Аннӳ хирĕç пулчĕ те:
„Петĕр те
Ята тухнă пирĕн“, тет,
Хĕпĕртет.
Сан валли эп пĕр парне
Хатĕрлеп.
Курсан эсĕ тĕлĕнен
Пулĕ теп.
Анчах эс асту!—Унта
Пит чечен
Хĕр-ипраç пырать кунтан,
Ку енчен.
Авланса килсен киле,
Эп сана

Тивĕç мар эс, теп халех,
Ордена!
Манăн кăмăл çаплалла:
Юратни
Ĕмĕрлĕхе пулмалла,
Юрать-и?
Тупа тунă эс тăван
Çĕршыва
Сыхлама ăна ялан
Ыр-сывах.
Çавăнпа сана çĕклет
Халăх та,
Хăйĕн паттăр ывăлне
Вăл картать.
Эп ыйтманччĕ халиччен
Тупасем.
Ман пĕрех ĕмĕт: пĕччен
Эс килсем.
Эп камне кунта хăвах
Пĕлĕн эс.
Пурнăç шав вĕт малаллах,
Ĕлкĕрес!
Виçĕ норма вырнă эп
Ку таран.
Преми илнĕ. Вĕренеп.
А унтан...
Ангелина пек вара
Тен эп те

Пулса курăп хăнара
Кремĕльте...
Вăрăм çыртăм: выходной,
Çампала.
Каçпала клубра кино
Пулмалла...
Çыр. Пур пулĕ санăн та
Канмалли?
Комсомолла салампа
Натали".

* * *

Çыпăçтарчĕ çыруне
Сарă хĕр.
(Кинона кайнă чухне
Ярăпăр).
Пăхрĕ вăл тĕкĕр çине:
Хăй—тӳрккес.
Курчĕ мăй таран çӳçне,—
„Ӳстерес..."
Икĕ куç харши хушши
Тикĕс мар.
Мĕнле пысăк шухăш-ши
Хывнă карт?
Хурлăхан пек куçĕнче
Ăс та пур,
Алхасу та пулĕ тен:
Хĕр вĕт, мур!

Кăшт хăяккăн тачĕ те
Пуç пĕксе,
„Курăпăр!..“ терĕ хăйне,
Куç хĕссе.

Вара вăл именчĕклĕн
Хăй умне
Тытса пăхрĕ тĕрлекен
Кĕпине.
Хĕрлĕ пурçăн çапçутах:
Юн, ялав,
Юрату та, пурнăç та—
Хĕрлĕ çав!

VI

ПОЭМĂСЕМ

ÇИРЁМ УЛТТĂ

С. Эльгере.

Çирём улттăн вĕсем, çирём улттăн,
Çирём ултă герой—сахал мар.
Вĕсен ячĕ пуриншĕн те ылттăн,
Çирём улттăн вĕсем, çирём улттăн,
Çирём ултă чăн-чăн коммунар.

Авăн уйăхĕн çирĕммĕш кунĕ,
Тамăкри пек вунсаккăрмĕш çул.
Кам пытарĕ паян, кам тунĕ?
Авăн уйăхĕн çирĕммĕш кунĕ
Çирём ултă маттур—пулчĕç çук.

Каспи тинĕс чăнах та йĕрет-çке,
Каçпала эс итле-ха, сăна:
Шаумян... Азизбек... Джапаридзе!..
Каспи тинĕс чăнах та йĕрет-çке,
Çирём ултă ята асăнать.

Красноводск—симĕс Каспи хули вăл,
Красноводскăн тĕрми пĕчĕк мар.
Шаумян калаçать: Савнă ывăл!
Çакăнта ак хупаç пăчăхма.

Мĕншĕнне ăнланмашкăн эс çамрăк,
Камшăнне те чухлаймăн-ха халь.
Кăлăхах сан пуçна эпĕ çаврăп
Пысăк шухăш кӳртсе, так ахаль.

Çавăнпа ытлашши сăмахсемсĕр
Ӳйрăлмашкăн тивет аçуна.
Самана пит хăрушă та сĕмсĕр,
Çав вутра ман асаплăх çунать.

Ман çеç мар, тĕнчери пур ĕçхалăх
Паян кун çăлăнăç тилмĕрет.
Малашне тек асаймĕ чуралăх,
Юлашки хут ларап тĕрмере.

Çирĕм пилĕк Баку комиссарĕ,
Çирĕм улттăмĕш эп хупăнап.
Каçарми ултавпа улталарĕ
Ирсĕр Фунтиков... Паллăн ăна.

Сывă пул. Анчах курăпăр халĕ,
Ан кулянăр, ан хуçăлăрсам.
Ыранхи телеграмм мĕскер калĕ,
Иличчен ырă-сывă ларсан...

. . . . . .

Ашшĕ урăх сăмах каламарĕ,
Хурал хушрĕ часрах пĕтерме.
— Сывă пултăр Кавказ истеррори!,
Тесе ячĕ пĕр харăс тĕрме.

Шаумян çĕлĕкне хывса илчĕ,
Куçĕсем ялкăшаç çиçем пек.
Итлĕр ав—калаçать Джапаридзе,
Итлĕр ав—калаçать Азизбек.

... Бакура пĕтĕм пурăнăç нехтă,
Çынсенчен сăрхăнать мазут.
Акăлчан йыттисем иртĕннех-тĕк,
Ĕççынни, хăвна ху ан сут!

Апшерон утравин хура юнĕ
Вĕсене халĕ канăç памасть.
Çав мула ĕçертсен, мĕскер юлĕ
Ишĕлен хуралта юсама?

Ишĕлет вĕт, куллен ишĕлет-çке,
Хăварма юрамасть ырана.
Тен вĕсем аслă çул та кĕтеççĕ
Индие, Тĕрĕке, Ирана.

Туркестан хирĕнчи шурă мамăк
Пĕр пекех вĕсене илĕртет.
Ĕççынни! Эс кала: „Памăп, памăп!
Çирĕм улттăн çеç мар эпир!“ те.

Вăл каç тинĕс тискеррĕн хумханнă,
Ичкекпе, ахăр, пулнă пĕр чун.
Тăшмансем çĕрĕпех каварланнă—
Раджинальд, Бичерахов та Кун.

Раджинальд, акăлчан капитанĕ,
Ашхабадшăн хăрушă хăна.
Индие пăхăнтарнă Британи
Мĕн çитменшĕн тата ăвăнать?..

— Ан çиленĕр мана, мистер Дружкин,
Анчах эп шухăшлап ăрасна.
Çирĕм ултта—вăл тупăшлă ушкăн,
Ана нимĕнсĕрех ярас мар.

Пирĕн мисси... пĕлетĕр вĕт эсĕр;
Туркестан... Малашне, тен, Кавказ...
Çавăнпа вăхăта ирттермесĕр,
Мешшеде вĕсене ăсатас.

Мешшедри акăлчан вăрттăн çарĕ
Кирлине лайăхрах тĕпчесен,
Çăмăлах Индие те куçарĕ,
А унта—вара пирĕн вĕсем...

— Ăнланатăп сире, капитанăм,
Ăнланатăп аван, мистер Джонс,
Ун çинчен эп тахçан шухăшланă,
Анчах халь ман пĕртен пĕрех шанс.

Сирĕн шухăшăр тăрĕ пулсассăн,
Сăмах питлĕхшĕн çеç пулмасан,
Ак халех телефон тăрăх сассăм,
Бичерахов патне çитĕ маň.

Вăл кунта пиçсе çитнĕ диктатор,
Сирĕнпе килĕштерĕ пуль, теп.
Мансăрах ĕнтĕ эсĕр чухлатăр:
Унăн ячĕ питрех те çӳлте...

Раджинальд кулса çеç алă пачĕ,
Куллинче те шăлне вăл хăйрать.
Бичераховăн чаплă-тăк ячĕ—
Ун мĕскершĕн вара пит кайра!

Тахçанах вăл ăна илнĕ сутăн,
Бичерахов тахçан унпала.
Шырав пуçлăхĕ çеç пулнă кутăн,
Халь ăна та вăл ак улталать.

Çирĕм улттă—вĕт тупăшлă ушкăн,
Пĕр лексен, чĕрĕллех ярас мар.
Ан çиленĕр ăна, мистер Дружкин,
Анчах шухăшĕ ун... ăрасна.

Красноводск тĕлĕрмест пĕр минут та,
Ун пуçне çавăрать Çирĕм улттă,
Пĕр минут куç хупман кĕçĕр кун.
Çирĕм улттă çинче шухăш ун.

— Е чăнах çаксене майласассăн,
Вĕт мĕнпур Кавказри пурлăха
Çак антра сурăх пек хура масса
Пуççапса кӳрĕ ман халăха.

Вырăс, вырăс,—тĕнче кĕлĕмçи!
Пăлханах, пăлханах, тен пултарăн.
Анчах саншăн халь нехтă, бензин
Бакура калама та çук тарăн.

Унта пирĕн ялав вĕлкĕшет,
Фонтансем пире майăн шавлаççĕ,
Ак тата аппаланăр пăртакçă,
Çур Раççейĕ те касăлĕ шет.

Хĕрхенетĕп сире. Пулĕ йывăр,
Коммунизм тăван мĕскĕнсем...
Акăлчан! Акăлчан! Ан çывăр,
Ёмĕр чаплă ятна ан çĕртсем.—

Ашхабад—Красноводск—Ашхабад—
Шак та шак тутарать телеграф
— Мĕн тăвас?—тесе Кун аптратать,
— Вĕлерес!—тет лерен Бичерахов.

Раджинальд ухă пек ярăнать.
Кĕçĕрех, çывăрмасăр васкас.
Кавказа, Кавказа пар ăна,
Асĕнчен каяс çук ун Кавказ.

Хĕрĕх тăххăрмĕш номер правус,
Ик вагон туркменпа вырăс çарĕ.
— Офицер! эс пуçна пит ан ус!
Тесе çеç капитан кĕрсе карĕ.

Пӗр никам та пӗлмест халӗ—темшӗн
Кирлӗ пулнӑ кун чухлӗ салтак.
Раджинальд куппере пӗчченех мӗн
Çирӗм улттӑшӑн пусӑ алтать.

Вагонсем алланса пынӑ майӑн
Вӑл пушшех хӗтӗртет хӑй чунне:
—Шаумян! Мана тин эс пуç тайӑн
Çак хӗçе хам çӗкленӗ чухне...

Çухрӑмсем вӗлтлетеççӗ хисепсӗр,
Кӑвакарчӗ кӗрхи тӗттӗм каç.
Ах, сисетпӗр, сисетпӗр, сисетпӗр!
Тенӗнех пралуксем янтӑраç.

Акӑлчан кантӑкран пӑхса пычӗ:
Çеçенхир. Саксаул. Хӑйӑр.
Куçӗсем этем юнӗшӗн выçӑ,
Вӑрхурах пек çиллес те хаяр.

— Тӗрме алӑкӗ ма йывӑç мар-ши,
Ма çӳлте-ши ун кантӑкӗсем?..
Пуçласам, тантӑш, ирӗклӗх маршӗ,
Хам çуралнӑ çӗре эп вӗçем.

Унта ватӑ аннеçӗм ман юлчӗ,
Аннепе аса килчӗ Арас,
Çав Арас хӗрринче пирӗн çуртчӗ,
Эп ялан шухӑшлаттӑм: тарас...

Вунтăватă çултах килтен тухрăм,
Анчах ман халăха сум çукран—
Вунă пин е вунпилĕк пин çухрăм
Çул çӳренĕ пуль эпĕ çуран.

Завода-и кĕрен, фабрика-и—
Тăрăхлаççĕ, кулаççĕ кăна.
Ман пулассăм килместчĕ çын айĕ,
Пулмасассăн сăнчăр тăхăнан...

Пуçласам, тантăш, ирĕклĕх маршĕ—
Хам çуралнă çĕре эп вĕçем...
Тĕрме алăкĕ ма йывăç мар-ши?
Ма çӳлте-ши ун кантăкĕсем?..

...Ак пĕри çывăхарчĕ вăрахăн,
Такама ӳкĕтлет вăл пухма:
— Ăнлансан, шикленмешкĕн пăрахăн.
Ăнланмастăн пулсан—эс ухмах...

Бакури пролетари халь пирĕн.
Çирĕм ултта—вăл пысăк чăрмав.
Çавăнпа эс вĕсемшĕн ан хирĕн,
Эп кунта вĕт килмен куçарма.

Тата çур сехетрен эпĕ пулăп,
Эс унччен те ĕçе татмасан—
Акă çак саламат, çак хĕç-пулă...
Пит те тутлă апат вара ман...

Хурал шалт туса çеç хисеп пачĕ:
— Манран ним те килмест, господин,
Раджинальд капитан ыра ячĕ
Ăшăмран тухас çук паян тин...

— Ку аван, ку аван. Çапла кирлĕ,
Пăхăнас пулать аслă чина,
Сире пит хĕстереççĕ мĕн вирлĕ,
Анчах кур—эпĕ вăл Раджинальд.—

Вăрăммăн кĕмсĕртетрĕ çăра,
Чĕрисем сиксе илчĕç пурин те.
Çирĕм ултă комиссара
Мĕне кирлĕ халь Перси е Инди?

Халь кунта вĕт, кунта пĕтермен,
Кавказра тумаллаччĕ тăванлăх.
Хăть грузин, хăть черкес, хăть армян—
Кашни ырлăх кĕтет, кашни халăх.

Анчах ак çирĕм ултăшĕ те
Пĕр этем мĕлкине тĕл пулаççĕ.
«Хатĕрленĕр халех Мешшеде!»
Тесе хучĕ салхуллă хуралçă...

Машинист Щеголютин! Итле:
Перевал е Ахча-Куйма...
Ĕçĕ пулĕ веçех камитле,
Унпала эс пултарăн пуйма.

Санран эпир нумай ыйтас çук,
Анчах ху тек çӳремӗн çарран.
Эп кӑтартнӑ çӗре çитес чух
Правуса шахӑртан та чаран.

Вӑл тӗлте разъезд мар, станца мар,—
Саксаул тӗмӗсем те хӑйӑр.
Анланатӑн пуль, теп? Ман сӑмах
Çӑмӑлах катмалли вӗт мӑйӑр...

Машинист Щеголютин итлет,
Май килсессӗн, хавас вӑл пуйма.
Ёçё пулё веçех камитле—
Перевал е Ахча-Куйма...

Саксаул тӗмӗсем... çеçенхир...
Раджинальд алӑ сулчӗ:—Чар!..
Шурӑмпуç хӑпарать... чечен ир...
Ни разъезд ку, ни станци те мар.

Кӗпӗрленчӗ те тухрӗ салтак.
Тӗрӗслеççё пӑшалӗсене.
— Офицер, Эсӗр пулӑр малта,
Халь пӗр вуннӑшне çеç эп чӗнеп...

Вагона витӗрех ку тирет,
Кӗрӗслетрӗ ак залп тулта.
— Юлташсем! Улталарӗç пире...
Юлташсем... Ултав!.. Ултав!..

Юрĕ, юрĕ... Халь тин пуç ан ус...
Фиолетов, Меттакса, Берг...
—Эп лăпках,—тет пĕр çамрăк матрос,—
Сывă пултăр Коммуна! Пер!..
. . . . . .

Икçĕр çиччĕмĕш юнлă çухрăм,
Юнпалан хĕрелен Красноводск...
Таса юн, эс пĕр айăпсăр юхрăн,
Икçĕр çиччĕмĕш юнлă çухрăм
Вăл паян та çаплах хĕрлĕ-ши?

Е вĕсен шăпиех çапла пулнă?
Тавăрмашкăн мĕскер парас-ха?
Каспий тинĕс паян та ав хумлă,
Тен вĕсен шăпиех çапла пулнă,—
Кашни çыннăн хăйне ăраскал.

Саксаул тĕмĕсем чĕрĕ юнлă,
Ăна курĕç пайтах мĕльюн.
Çирĕм улттăн çеç мар эпир юнлă,
Саксаул тĕмĕсем чĕрĕ юнлă,
Хăйăра сăрхăнаймĕ вăл юн.

Ав самум та çаплах йĕрсе илчĕ.
Тинкерсе эс итле-ха, сăна:
Шаумян, Азизбек, Джапаридзе...
Ав самум та çаплах йĕрсе илчĕ—
Çирĕм ултă ята асăнать.

Çирĕм улттăн вĕсем, çирĕм улттăн,
Çирĕм улт комиссар сахал мар.
Вĕсен ячĕ пуриншĕн те ылттăн,
Çирĕм улттăн вĕсем, çирĕм улттăн,
Çирĕм ултă чăн-чăн коммунар.
1927.

УЛАТИМЁР ХАПХИПЕ ШАРТИВМЕН ТРАКТИ

1.

Çанталăк сивĕ, виç хĕвеллĕ.
Сăмса вĕçне тăм чĕпĕтет.
Атя, вăртаххăм, хистемелĕх
Пулсассăн кĕсрӳнте хевте!

„Шăллăм, ку аслă Вутăш варĕ,
Сума-суса иртес пулать.
А унсăрăн вăл аташтарĕ,
Çухатăпăр эпир çула“.

Апла мĕн... Кӳтнĕ çĕр пĕр евĕр
Выртать шапшуррăн куç çисе.
Кăрчанкă ут, çуна сĕрлевĕ,
Пас тытнă чăрăш лăссисем...

Ну халь, вăртаххăм, хăтăлатпăр:
Маяк пек йывăç. Халь—хăван!
„Мĕскер калатăн эс? Тăна кĕр!
Ку—Киремет кати, тăван.

Киреметрен тарма юрать-и!
Чăваш-çке эс, пăртак чухла:
Е лашана пулать юра-чир,
Е хамăра тытса хутлать".

Е, е, вăртаххăм! Пĕтрĕ йывăç.
Тилхепеле кăшт малалла.
Каçчен эпир çитмешкĕн тивĕç,
Ман, тупата, васкамалла.

„Тăхта, ырçыннăм, ку таса çĕр:
Çак çырмаран çич ялпалан
Учук тумашкăн шыв ăсаççĕ,
Ку кĕлĕллĕ шыв авалтан.

Утпа çеç мар, çуран та çылăх
Кунта мăнкăмăллăн утма.
Хуллен, ак час... Хуллен, ак çывăх...
Кăшт сыптарам-ха утăма..."

Çанталăк сивĕ, çулĕ сăхă.
Ай-хай сан çухрăму инçе,
Чăваш çĕршывĕ! Чăнласах-и
Шăнтса вĕлерĕн çул çинче?

2.

Мăн çул çийĕ—йывăр чул,
Икĕ енĕ—хурăнлăх.
Хур(ă)нтан хурлă йывăç çук,
Эпир тата хурлăхлă.

Хурăн тăрри ваш та ваш,
Такан сасси чак та чак:
Килет пуль кантур тавраш,
Чăм сакайне, ачапча!

Чăнкă пĕкĕ, йĕс шăнкрав
Ыткăнать сиккипеле.
Халăха— куççуль, макрав,
Усĕр тиеке—телей.

„Уç нӳхреп, Василь Иванччă!
Лаççуна уç чариех!
Сан юр-ай сăри аванччĕ,
Асса тух-ха чарипе“.

Тип кашăк çăвар çурать—
„Кучченеç!“ тет сăрлă пыр.
Тăкăнать çураçура
Шăрттан, чăкăт, сăра-пыл.

Пурин те мар вăрманта
Вĕлле хурчĕ—ылттăн хурт.
Нумайĕшĕ йĕм антар
Куланайшăн хутран хут.

Пурин те мар кĕтӳпе
Чăмăр шăрттан такисем.
Çукки—хăвăн ӳтӳпе
Хурăн пăтти активсем.

Хулă, чышкă, саламат,
Кăвакарăнчăк сан-пит.
Тӳшек-минтер саланать
Шуйхаштарнă чăхсем пек.

Сиксе вĕрен сăмавар
Сĕтел çинчен çирпĕнчĕ:
„Хырăçна часрах тултар!
Леш тĕнчере ĕçĕн чей“.

„Эй, апайкă! Хыв тухъя,
Кас тевет те шӳлкеме!
Хатĕрленнĕ эс туя,
Ак туй саламачĕ—ме!“

Чарт! сирпĕнет чĕрĕ юн
Ăмăрткайăклă тенке,
Ăмăрткайăк чĕрни ун
Чĕрине чавнă пекех.

Пурте мар саламата
Лăпкăн, йăвашшăн тӳсет.
Тытăнаç пăлханма та
Халăх хушшинчи кӳлсем.

Анчах çав мăн çулпалах,
Улатимĕр трактипех,
Пăлхавçăсен утмалла
Сывпуллашса ратнипе.

Кашни хурăн çулçинче
Çĕнĕ хурлăх сисĕнет.
Касса ярса пулинччĕ
Хурлăх йывăççисене.

Кашни шурă вулăра—
Çĕршывăмшăн вил-юпа.
Ешĕл çулпа тулхăрать
Колонизаци юнпа.

„Эх, пурăнăç—талпиçен!
Туйăнать çеç пурăннăн.
Кăклантăр-и, ялйышсем,
Çак ăнманă хурăнлăх!..“

Кайрĕç—вутран çулăма.
Чăлтăр-чăлтăр сăнчăр çеç
Хурăнлăха, çула май,
Хăварать çÿçентерсе.

Тата çÿреç халиччен,
Чуна сиввĕн тивĕнсе,
„Улатимĕр хапхинчен
Тухман-ха эс!“ тенисем.

Ку—пирĕн историйĕн умĕ.
Ылханлă та мăшкăллă тапхăр.
Вăл çук, нихăçан та тек пулмĕ.
Яшсемшĕн ăна асăнатпăр.

*

Шофер тормозларĕ те чарчĕ.
Мĕнле кĕрмешӳ çул çинче?
Чулсем хурăнаççĕ тачă,
Çынсем—тачăрах чулсенчен.

Ватти-вĕттипех капланнă,
Ăçтан кунашкал хускав?
„Кĕтетпĕр авто-колонна:
Мускав—Кара-Кум—Мускав.

Çырмаллă-çатраллă çĕршывăм
Хырать, тикĕслет хăй питне.
Мĕн чухлĕ шур урлă йĕр хывнă,
Мĕн чухлĕ тумхах хăйпăтнă!

Эп антăм.—Салам-аликкĕм!..
Çунаççĕ вутсем. Чей вĕрет.
„Э... çак урапа валли мĕн...“—
Янрать хыçалтан чеерех.

Мана паллаштарчĕç: „Ударник.
Хастар Шартивмен асатте.
Тин çеç тăхăрвуннă тултарнă,
Комсомолшăн хăй пит касать те...

Çич çухрăм кăкланнă вăрман çак,
Çак çул хут çине—куратни?—
Ун ячĕпеле вырăнаçнă:
Тябук Шартивменĕн трактн“.

Тăрать радиаторпала юнашар
Кăклавçă, шăппăн паккаса чĕлĕме.
„Çапла, ачисем,—терĕ вăл,—кунтан шар
Тивмесĕр юлсан, малашне çук тивме!

Кун пек кӳмепе эп тата çер çул пурнăп.
Çемçе те пулас шеремет, эккей!
Тавайăр эппин, йĕкĕтсем! Çитĕ. Туртнă.
Сарса пĕтерер хамра тивĕç чикке“.

Уттарчĕ вăл кĕреçепе, ватă паттăр,
Шак-шак шаккаса юман авăр çумне
Илемлĕ пăхăр чĕлĕмне... „Хăйăр парăр!“
Тени—ун сасси—илтĕнет ман енне.

1933.

СОНА

Вĕсем тăваттăн чарăнчĕç:
Иосиф Нил—шутник еврей,
Оленин—вырăс, Хай—метис,
Ертсе пыран лопарь—Морей.

Паян ирпе чип-чиперех
Шăнса шартлатрĕ градусник.
Пушанчĕ спирт, пĕтрĕ эрех,
Йытсем те начарланчĕç пит.

Йытсем те ырханланчĕç те,
Апат та сахалланчĕ-тĕр.
Консервă, аш пĕтет ĕнтĕ,
Анчах инçе çул тытнă çĕр.

Калла кайма тата инçе:
Çурма çултан иртсе вĕсем....
Çапла çара хир варринче
Канма тарать тăват этем.

Пĕлĕт çинче ик-виç хĕвел
Юпа пек тăсăлса тăраççĕ.
Анчах ăшă памаççĕ, шел,
Хĕвелĕ те кунта пăртан-çкеĕ.

Пĕр шурă юр, пĕр вилĕ кĕрт—
Умра, хыçра, йĕри-тавра
Ним сас та çук, шăпăрт-шăпăрт,
Чĕлхесĕр шартлама тăрать.

* * *

Çынсем ӳпле майларĕçĕ,
Йытсем юра чавса выртаççĕ.
Ăшă тĕтĕм тулан брезент
Вĕсемшĕн маррине чухлаççĕ.

Вăрăм çăмлă çемçе тирсем
Çара этемшĕн сĕвĕнеççĕ.
Çакна пĕлеççĕ-тĕр вĕсем,
Пĕлсе, сиссе ӳпкелемеççĕ.

Пират—малта пыран ертӳçĕ.
Вăл, сакăр йытă ячĕпе,
Морей сăнне сăнаса хучĕ:
Виç кун ĕнтĕ каçпа-ирпе

Лопарь шăннă пулла касса
Валеçнĕ, кӳлнĕ йытсене.
Çапах та тепĕр мăн сасса
Мантараймасть Пират хăйне.

Çав сасă халь нумай чĕнмест,
Пăхмасть çав çын йытсем çине.
Анчах пират ĕненеймест
Хуçа Оленин маррине.

Вăл, унăн йытă шухăшне,
Сăнамалла çапа парать.
Çампа пăртак шур куçĕпе
Пăхса илет вăл лопаре.

Ĕнер касман пуллах унтан
Туртса илсеччĕ вăл пĕрре.
Морей патакĕ пит тăн-тăн
Лекет иккен ӳте-тире.

Паян та ак çав ватскерех
Валеçрĕ йытсене апат.
Хуçа тухмасть те ӳплерен...
Йăлтах хуйха ӳкет Пират.

Анчах, лопарь кĕрсе кайсан,
Тĕлĕнмелле ĕç турĕ йытă:
Сасартăк вăл пуçне йăтса
Чунтан-вартан, ӳпкевлĕн, хытă

Уласа ячĕ те пĕрре,
Пулла хыпса, утса кăна
Ӳпленелле илсе кĕрет,
Куçпа шырать Оленина.

Пăхса илет Оленин: „Ну?
Мĕскер эс, тусăм, вăхăтсăр?
Çитет сире ачашлану,
Çăмар вăрăм вĕт-ха, чăтăр.

Мĕншĕн çиместĕн? Ак тата!
Мĕнпе тăрантăн? Ну, кала...“
Ачашласа вăл Пирата
Хăлхи хыçне сăтăркалать.

Пират, пулла пăрахрĕ те,
Элеклĕн йăнăшса илсе,
Пӳне çӳçеннĕн чĕтретет
Этемĕн кăмăлне сиссе.

Унтан вăл ачашлан алла
Тавтунăн çуласа илет,
Вара хаваслăн каялла
Тухса юртать пуллипеле.

* * *

. . . . . .

„Çынна никам та йытă пек
Юратаймасть çак çĕршывра“
Тет Нил кăшт хурлă сассипе,
Чĕлĕм тивертнĕ хушăра.

„... Никам та, нимĕн те! Ан ман:
Пăлан та çитеймест йытта.
Çын асапне мĕн авалтан
Кунта пĕр йытă çех йăтать.

Чĕлхи кăна çук мĕскĕнĕн,
Пурне те ăнланать, пĕлет.
Анчах мĕскершĕн-ха, мĕншĕн
Вăл кĕрешет çынпа пĕрле?

Çак утмăл çичĕ градусра
Мĕншĕн çӳрес ун пирĕнпе?..
Вĕрет, Морей, чейне часрах,
Ман хырăм тирĕ кив пим пек".

— Сана ку Хура тинĕс мар-им?—
Тет Хай, сайра шăлне йĕрсе:
— Çук, ман шутпа... чипер хĕрарăм:
Чи шанчăкли...—тет куç хĕссе.

„А савмасассăн?"тет Оленин.
— Тата аван!—тет Хай:—пĕрле
Çанталăк крепăçне илетĕн,
Кайран... Джек Лондăн евĕрлех!..

* * *

Лопарь Морей сенкер пăра
Вĕттĕн ката-ката ярать.
Хуран чашланă хушăра
Çакна такмакласа парать.

Сире эп пит нумай тăнларăм.
Ăслă сăмахсемех илтеп.
Хĕрарăм, тенĕрен... Хĕрарăм—
Чăн-чăн хăватлă вăй пуль теп...

Каланăччĕ-ши эп сире
Атте ман вырăс пулнине?
Пĕлтернĕччĕ-ши—ĕмĕре,
Çак Пăрлă тинĕс пуллине

Йытсем валли касса çеç мар,
Кăшт урăхла та ирттерме
Пикеннĕ яш шухăшăма?
Кăмăл тусамăр итлеме...

Нумай пулать ĕнтĕ вăл халь.
Кунçул пайтах чĕрчун вĕлерчĕ.
Унчух çак сив çанталăка
Сайра йĕлтĕр пырса кĕретчĕ.

Пĕрре, тĕтреллĕ ирхине,
Тӳлен тытакансем патне
Эп тухрăм тинĕс хĕррине;
Пĕлместĕп халь мĕскершĕнне.

Атте тӳлен хуçи пулса,
Тен çавăн юнĕ чĕннĕ-тĕр...
Пăхатăп—урнă пек хуса
Чукмарпала çӳрет пĕр хĕр.

Пĕр пăр çинчен теприн çине
Кушак пек çăмăллăн сикет.
Элес-мелес тӳленсене
Пĕрре çапать те—минретет.

Хăюлăх, меллĕх, çирĕп вăй
Мана пит килĕшрĕ хĕрте.
Кĕске кĕрĕкпелеччĕ хăй—
Чăрмавсăр, чух тумтирĕ те.

Тӳлен тытакансем ăна
Сона тесе чĕнеççĕ мĕн.
Вĕсен чĕлхипеле **Сона**—
Таса тени пулать иккен.

Хăйсем мĕнле йăх иккенне
Халичченех пĕлместĕп эп.
Анчах Сона хĕр пеккине
Курмарăм урăх вĕсемпе.

Вăл урăх йăх пуль, терĕм эп.
Пĕр кун тухап, ик кун, эрне...
Ман хутăш юнлă чĕреме
Туртать хĕр тинĕс хĕррине!

Ак сирĕн шурă куркăра
Хăш чух кăвар çути ӳрет.
Ун пичĕ çав сăнарлăрах,
Куçхаршисем авмак, çӳхе...

(Морей пăра хыпса пăхать)
... Эп те тӳлен тытма кĕреп.
Тӳленçĕсен пит аякка
Çын ямалла пулать пĕрре.

Шăпа тытаччĕ этемсем.
Эп пултăм ирĕккĕн кайма.
Нумайĕш пăхрĕç тĕлĕнсе...
„Пĕччен сахал. Тата кама?

Пĕри вилсен тепри чĕрĕ.
Асту, пĕрре те хăнана
Каймастăн эсĕ çав çĕре!“
Тесе витерчĕçĕ мана.

Хампа эп ыйтрăм Сонана.
Çакна илтсессĕнех пĕри,
Хавшак та хăлтăскер кăна,
Ĕревĕçленчĕ çав тери:

„Эп те каятăп!“ терĕ вăл.
Хăйĕн вăйне шанан этем
Ун пек калпайчăк çил-тăвăл
Нихçан та кăлармасть. Пĕлтĕм:

Ку хай, эсир каланă пек,
Пĕр тӳсĕмсĕр мăнтăр кăна.
Паллах çав хулăнлăхĕпе
Ятне те панă—Такана...

Çапах та виççĕн кайрăмăр.
Калас пулать: Сонашăн эп
Укçа парсах тухса,—мăшăр
Пулать, тесе ĕмĕтленеп.

Сона чĕнмерĕ нимĕн те.
Йытсем майларăмăр, çуна,
Çимеллисем-мĕнсем ĕнтĕ...
„Лар!“ терĕç. Ларчĕ ман çумма.

Инçе, инçе Тăварлă Кӳл!
Пĕр кун каян, ик кун, виç кун...
Таçта пĕтет сан тавлăку,
Таçта вĕçĕ-хĕрри çулун.

Никам хутне кĕмен хĕлле.
Çанталăк хытă, хальхи пек.
Йытсем валли йĕлтĕрпеле
Сукмак хыватпăр черетпе.

Вăрçать хай пирĕн Такана,
Вырта тăрать, мур, çемçешке.
Тапса тăраткалап çакна,—
Шăнса ан вилтĕр, тетĕп-çке.

Çук, кайнăçемĕн хирĕçет:
„Йĕлтĕр ура çумне шăнать.
Мĕншĕн çак тивĕçсĕр ĕçе
Çыхлантăм-ши?—тет.—Камшăн, а?!“

Сона чĕнмест-ха нимĕн те,
Ӳпкевлĕ сас та кăлармасть.
Эрне ытла çулта ĕнтĕ,
Калла май çук тин тавpăнма.

Анчах апат пётсе килет,
Çул—йывăрланнăçем йывăр.
Малтан эпир каяс тёле
Кун чухлё шутламарăмăр.

Мурта-и тен Тăварлă Кӳл!
Хёвел ик-виç тёлте пирки
Аташкаларăмăр та пуль,
Çулта пулать вăл ун пекки.

Йёрет вёт пирён Такана,
Арçын пуçпа ӳксе йёрет;
Турттар эс çунапа ăна!
„Çук!“ терё хай Сона пёрре.

„Эпир ăна çак хир тăрăх
Ярăнтарма тесе килмен.
Ан тив вăл юлтăр, вырттăрах,
Шăнса çăмăлтарах вилме“.

Çакна, хăй вилсе курнă пек,
Ёнентерсе калать Сона.
„Юлташ—ялан юлташ, теп эп,
Епле хăварăн-ха ăна?“

Сона чёнмест. Каятпăр шав.
Йытсем тӳнеççё выçăпа.
Вилсен те пăрахмастпăр çав:
Шăмми те, тирё те—апат.

Канмашкăн чарăнсан часах
Сона йыт ашĕ хатĕрлет.
Куллен пĕрер йыт тăварса
Туха пуçлатпăр ирпеле.

Юлашкинчен тăватă чун
Тăрса юлаççĕ кӳлĕме.
Анчах шыв урлă каçнă чух
Вĕсем те пулчĕç пăр айне.

Сона, умне шалça тытса,
Каçса каять йĕлтĕрпеле.
Эп, пăструмкасене касса,
Çуна çине юлап тепле.

Таканана аран-аран,
Кантра-пăяв сыпса ярса,
Туртса кăлартăмăр шывран,
Ăшăткалатпăр сăтăрса.

Унтан пур пек апатсене
Виç пай туса пайларăмăр.
Сона кăшт пăхрĕ ман çине:
„Çук, терĕ, ку ĕç аван мар.

Çак халсăр пĕчĕк нянине
Апат пани халь усăсăр.
Тăварлă Кӳлĕ хĕррине
Çитес те çук вăл пурĕпĕр“.

Эп тепĕр хут: çулти асап
Пурне те тивтĕр, текелеп.
Ан тив, парар та уйăрса,
Хăй пайĕпе—хăть пуçхĕрлĕ...

Унччен те пулаймасть—Сона
Каш туртрĕ ман револьвĕре.
Сиксе чĕтрен Таканана
Вăл хушрĕ ăшăнма—лере...

Эп тĕлĕнеп. Анчах ăшра
Упкевĕм çук хĕре, пĕлеп.
Сона лăпках пăхать куçран:
„Каяр,—тет,—ан пуççап вилле".

(Калавçă хучĕ пурттине.
Итлекенсем, чĕлĕм чĕртсе,
Нăкрах хĕстерчĕç пĕр-пĕрне
Ăшă тирсем ăшне кĕрсе.

Ӳпле тӳпи тĕтĕмпеле
Йĕпеннĕн пасарса тăрать.
Кăвак тĕтĕмпеле пĕрле,
Морей сăмахĕ хăпарать).

...Каятпăр. Эп пуртта йăтап.
Сона çĕклерĕ кĕрĕке.
Виç пайлă тунă апата
Хайхи валеçрĕмĕр икке.

Анчах тухсах пырать апат,
Çывхарăнмасть Тăварлă Кӳл.
„Тăватă путнă йытăпа
Эрне пурнаттăмăрччĕ пуль“

Тесе утатпăр хуйхăрса.
Кунне-çĕрне те мантăмăр:
Тăр кăнтăрла та вут хурса
Канма тăра пуçларăмăр.

Кайсан-кайсан, юлашкинчен
Тĕлпултăмăр пĕр арçынна.
Этем кăштах шăнса вилмен,
Çитменнине вăл выçăхнă.

Аллисене тăсса, темле
Чĕлхесĕр евĕр кĕленсе,
Аран-аран вут патнелле
Çывхарчĕ вăл упаленсе.

Сона чăрр! пăхрĕ ман çине,
Никçан капла пăхманччĕ вăл:
Çак выçăхнă çынна çиме
Парассăн çутăлчĕ кăмăл.

„Парар-и çак çынна çиме?
Хыпар пĕлтерĕ терĕм эп.
Сона каллех пĕр ун çине,
Пĕр ман çине пăхать темме.

Унтан вăл аллипе сĕлттерĕ:
„Çук, памăпăр ăна апат,
Тăварлă Кӳл инçе-ха“ терĕ
Тĕреклĕ, çирĕп сасăпа.

Çын юлчĕ—халсăр, пĕр пĕччен...
Çанталăкпа кĕрешнĕскер,
Паллах, вăл выçлăх аллинчен
Чĕррĕн хăтăлаймарĕ-тĕр...

Утатпăр малалла çаплах.
Ĕмĕтĕмĕр—Тăварлă Кӳл.
Апат йăлт пĕтрĕ. Выçаллах
Тăрса сĕнккетпĕр ак пĕр кун.

Сона малтан урасăрланчĕ,
Пырать-пырать те лап ӳкет.
Манра та нумай мар пек шанчăк,
Ман ӳтĕм-тирĕм те пӳхет.

Ак Морж Шăлĕ текен скала.
Унтан Тăварлă Кӳл патне
Виç кун каяççĕ йытпала.
Эпир çуран. Вăй-хал пĕтнĕ.

Пăлан Утти тĕлне çитсен
Хĕрарăм ӳкрĕ те—тăмасть.
Аран сирен тутисенчен
Илтетĕп пăшăлтатнă сас.

Хăлхапала выртса тăнлап:
„Арçыннăм!—терĕ вăл мана.—
Ман çулăн вĕçĕ çакăнта.
Сан—кайтăр маларан мала...

Сан сивĕ чĕрӳнте Сонашăн
Йăва пулмарĕ ыра чух.
Ăна асаппалан сăнасшăн
Эс илтĕн йывăр, вăрăм çул.

Калам сана, Морей: малтан,
Эс маншăн ылттăн парсанах,
Чĕре сан май выртмарĕ ман,
Кӳрентĕм эп унчух сана.

Анчах арçын хăй йыттине
Уссишĕн хĕрхенет, куран.
Çаплах эс те Сона çине
Ăшшăн пăхрăн, хăйне кура.

Сан шухăшу ăслă, Морей,
Ху эсĕ витĕмлĕ арçын.
Çампа ман хуйхăлла чĕре,
Сана сăмахсăр парăнчĕ...

Çулахи кун, уяр чухне,
Йĕри-тавра хĕвел куран.
Çаплах эс те Сона куçне
Хĕвелĕн курăнтăн кайран,

Вара ун ирĕлчĕ пăрĕ.
Сона ялан сана итлерĕ:
Йĕр такăрлатрĕ, йыт пăхрĕ,
Нихçан та „ывăнтăм“ темерĕ.

Халь ун йĕрĕ пĕтрĕ ĕнтĕ,
Паян кунтан пĕччен эс пырăн.
Çапах сан сивĕ чĕрӳнте
Пулмарĕ маншăн ăшă вырăн...

— Чăнах, Сона, чăн,—тетĕп эп,—
Пит сивĕ пулчĕ ман чĕре.
Анчах паян эп ирĕлеп,
Сан асапу мана ирет.

Хĕрарăмăн юратуне
Ăнланса çитрĕм эпĕ, теп...
Сонан кӳтсех пыран пӳне
Чăмăртаса кĕрĕк витеп.

„Эп савăнатăп“ тет Сона,
Пуçне хурать ман пуç çумне.
„Итле, Морей,—тет вăл мана:
Пĕрре эп, пĕчĕкçĕ чухне,

Хам ӳснĕ вăрманта... лере...
Килйыш ухатана кайсан
Пĕччен юлсаттăм ӳплере
Тирсем çинче вăй выляса.

Сасартăк алăк умĕнче
— Уф!—терĕ пĕр хăмăр упа.
Унччен те пулаймасть—пиччe
Персе те çитрĕ сăнăпа.

Эп пит хăрарăм: пиччене
Упа пĕтĕркелет чикет,
Пĕр хăй пулать пиччe айне,
Пĕр ун сăнни çине лекет.

Пиччен пит-куçĕ юн кăна,
Пӳрни—упа çăварĕнче.
Çапах та урнă упана,
Вăрçсан-вăрçсан, çĕнчех пиччe...

Сăнарăн-ши, арçыннăм, эс
Хай эпĕр чĕртнĕ вут патне
Пырса кĕленнĕ этемме?
Сăнарăн-и ун сăн-питне?

Сăн-пичĕ çĕвĕлĕччĕ ун.
Сăнарăн-и аллисене?
Хăрах пӳрни çитместчĕ ун,
Тымарĕ çеçчĕ пуçпӳрнен...

Вăл ман пиччеччĕ. Эп ăна
Апат памарăм выçă чух.
Вăл—манăн пурнăçа çăлнă,
Унтан хакли вĕт ним те çук...“

— Чăнах, Сона, чăн,—тетĕп эп,—
Пĕр пурнăç хаклă çĕр çинче...
Сисетĕп хам: пит ерипе
Тапать чĕри ун кăкринче.

Вара вăл ман алла илсе
Хăй хӳнелле чикет хуллен:
„Арçыннăм!—тет,—çакна çисе
Эс çитĕн Тăварлла Кӳле...“

Шанатри ватă пуçăма?—
Йĕкĕр чăмăр пек хутаçпа
Аш тыттарать мана Сона,
Тӳсе тултарнă типĕ аш!

Тин чухласа илетĕп эп
Мĕншĕн вăл час ывăннине...
— Çук! Ман йĕрĕм те пĕттĕр, теп,
Тăварлă Кӳл—çăва çине!..

„Морей,—тет пит хуллен хĕрарăм,—
Ан ултала хăвна халь тин.
Сана эп паттăрăн кураттăм,
Хăçан та паттăр пул эппин...

Çук, ан хăвар ман кăмăла,
Шансах вилес килет сана.
Малтан мала, малтан мала
Çулу сан кайтăр яланах.

Сан умăнта ман пĕтрĕ парăм,
Ак сывлăш та пĕтет ĕнтĕ...
Нумай пуян, чипер хĕрарăм
Тĕлпулăн эс ĕмĕрӳнте.

Анчах пĕри те Сона чухлĕ
Юратмĕçĕ вĕсем сана...“
Асап тумламĕ—вил куççулĕ
Тухса шăнса хытать Сонан...

(Морей чей хуранне вĕçерчĕ)
...Тем пысăккăш çак юрату!
Вĕçĕ-хĕррисĕр унăн терчĕ,
Хăватлăх та, чăтăм та ку.

Пĕрварлă выçă пиччĕшне
Апат памарĕ çул çинче.
Вăл çеç те мар—хăй çимĕçне
Татса хăварчĕ хăйĕнчен.

Çапла: телей уççи—асап.
Çапла Пăлан Ӳтти панче
Пуç хунă хĕр Сона—Таса...
(Калавçă шăппăн чарăнчĕ).

* * *

Йытсем, теме сиссе, улаççĕ.
Пасарнă, çăмламас Пират
Ӳпленелле юртса пырать.
„Мĕн пулнă-ши?“ Çынсем тухаççĕ.

Çĕрле. Сип-сивĕ çăлтăрсем
Салхун çунаççĕ тӳпере.
Кăвак хуппи чĕтрентерсе
Çанталăка „сăн ӳкерет“.

Малтан ак пĕр-ик-виç тĕлте
Шевле пек кĕренрех хумсем,
Пĕр сасăсăр, шăппăн хӳсе,
Сăрлаççĕ хăмăр пĕлĕте.

Унтан шăп полюс тĕлĕнчен
Тем пысăккăш çавра хапха
Кăваккăн, симĕссĕн, тĕрлĕн
Карса илет çанталăка.

Çак аслă асамат кĕперĕ,
Çак ĕмĕрхи тĕнче илемĕ—
Миçе курсан та—тĕлĕнтерĕ,
Никам ка „йăлăхтарчĕ“ темĕ.

1929.

27500
Центр. Библиотека

ТУПМАЛЛИ

I Ленина – Сталина

Мухтав аслă Ленина! Мухтав аслă Сталина 5
Советсен керменĕ 7
Ватă колхозник юрри 9
Кавказра 10
Хумхан, Хура тинĕс 13
Сăпка юрри 15
Тавтапуç 17

II Сулмак

Ирĕк тимĕрçĕ 21
Самана. 23
Автономисен маршĕ 25
Çунат çумне çунат. 27
Йĕлтĕрçĕсем 29
Урампа утсем иртеççĕ 31
Пул примерла Ленинçă 33

III Тивĕслисене

Сăвăç 37
Гарсиа Лоркка 38
Хади Такташа асăнса 40
Çеçпĕл Мишшине 42
С. Эльгере 44
Байрон 45

IV Сонетсем

Композитор патĕнче 53
Кимĕпе 54
Курнăçу 55

V Хамăр ялсем

Эльтиван пичче 59
Карпа-Ваçук — пĕвевçĕ 68
Сантăр—çĕлĕк çавракан. 72
Натали кĕпе тĕрлет 76

VI Поэмăсем

Çирĕм улттă 85
Улатимĕр хапхипе Шартивмен тракти 97
Сона 104

K

K

Цена 3 руб. 25 коп.

П. ХУЗАНГАЙ

СТИХИ И ПОЭМЫ

На чувашском языке

Госиздат ЧАССР
1941